ОБЯЗАТЕЛЬНЫ
экземпляры в количестве ______
экземпляров
ПОЛУЧЕНЫ
«___» ____________ 19 г.
Подпись ________

3452
42-148

В. М. МОЛОТОВ

# Оккупациленӗ Совет районӗсенче германин влаҫӗсем ҫавтери усал, тискер тата пусмӑрла ӗҫсем туни ҫинчен тата ҫав преступленисемшӗн германин правительствипе командованийӗ ответлӑ пулни ҫинчен

## ЮТҪӖРШЫВ ӖҪӖСЕН ХАЛӐХ КОМИССАРӖ В. М. МОЛОТОВ ЮЛТАШ ЯНӐ НОТА

★

Цена 25 коп.

ЧӐВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1942

Ютҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов юлташ Совет Союзӗ дипломатиллӗ ҫыхӑну тытса тӑракан ҫӗршывсен посолӗсемпе посланникӗсем патне ҫакӑн пек нота янӑ:

„Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн Правительстви хушнипе Сире ҫакӑн ҫинчен пӗлтеретӗп:

Гитлерла захватчиксем хӑйсем вӑхӑтлӑха йышӑнса илнӗ е халӗ те йышӑнса тӑракан территорисем ҫинче пур ҫӗрте те, нимӗнле преступленисем умӗнче те, нимӗнле хаярлӑх тата пусмӑрлӑх умӗнче те чарӑнса тӑмасӑр, Совет халӑхне ҫаратни ҫинчен тата тӳрремӗнех пӗтерсе пыни ҫинчен Совет Правительстви аллине ҫаплах ҫӗнӗрен те ҫӗнӗ материалсемпе пӗлтерӳсем килсе тӑраҫҫӗ. Ҫав усал ӗҫсем дисциплинӑсӑр уйрӑм ҫар чаҫӗсен, нимӗҫсен уйрӑм офицерӗсемпе салтакӗсен ӑнсӑртран тунӑ ӗҫӗсем пулманни ҫинчен Совет Правительстви пӗлтернӗччӗ ӗнтӗ. Хальхи вӑхӑтра Совет Правительствин аллинче нумаях пулмасть ҫапса аркатнӑ нимӗҫ чаҫӗсен штабӗсенче тытса илнӗ документсем пур, ҫав документсенчен ҫакӑ курӑнать: нимӗҫсен фашистла ҫарӗ хӑй тӑвакан юнлӑ преступленисемпе тискерлӗхсене Германи правительствин тӗплӗн шухӑшласа тата пӗчӗк ыйтусем таранах палӑртса ҫырнӑ планӗсем тӑрӑх тата Германи командованийӗн ҫавӑн пек приказӗсем тӑрӑх туса пырать.

Германи захватчикӗсен-империалисчӗсен ҫав планӗсемпе приказӗсенче ҫакӑн пек тума палӑртса хунӑ:

Пирӗн ҫӗршывӑн халӑхне хуласенче те, ялсенче те **пӗр ҫынна хӑвармасӑр ҫаратса тухасси**, Совет гражданӗсен хӑйсен уйрӑм пурлӑхӗсене тата Совет государствин харпӑрлӑхне тытса илсе Германие ӑсатасси;

Совет Союзӗн хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсем пыра-пыра ҫапнипе гитлеровецсен тухса кайма тивнӗ хуласемпе ялсене **пӗтӗмӗшпех ҫӗмӗрсе тӑкасси;**

Совет Государстви колхозсене ӗмӗрлӗхе тата тӳлевсӗр усӑ курма панӑ **ҫӗрсене тытса илсе** нимӗҫ оккупанчӗсен аллине парасси; тытса илнӗ ҫӗр ҫинче Германи „управляющийӗсене“ тата Германи помещикӗсене вырнаҫтарасси;

Германи захватчикӗсем-империалисчӗсем пуҫпулса тӑнипе, пирӗн рабочисемпе хресченсем валли **чуралла - крепостнойла ӗҫлев тата пусмӑрлӑх туса хурасси;**

Совет гражданӗсене—хуласенчи тата ялсенчи ҫынсене—темиҫе миллионшар ҫынна, „тыткӑна лекнӗ ҫар ҫыннисем“ вырӑнне хурса, ирӗксӗр ӗҫлеттермешкӗн Германие **вӑйпа илсе каясси;**

**вырӑҫсен нациллӗ культурине тата Совет Союзӗнчи халӑхсен нациллӗ культурисене пӗтерсе лартасси.** Вырӑссене, украинецсене, белоруссене, литовецсене, латышсене, эстонецсене, Совет Союзӗнчи ытти халӑхсене ирӗксӗрлесе нимӗҫлетесси;

**Совет гражданĕсене**, вĕсен национальноçне, социальнăй положенине, арçынне-хĕрарăмне тата миçе çултине пăхмасăрах, тискеррĕн пусмăрласа, хĕнхур кăтартса тата асаплантарса вĕлерсе, Совет халăхне, тыткăна илнĕ çар çыннисене, партизансене **пĕтерсе хурасси**.

Çакăн пек усал плансемпе килсе кĕчĕç пирĕн çĕршыв çине нимĕçсен фашистла кĕтĕвĕсем. Гитлерăн çак вăрă-хурахла планĕсем Германи çар командованийĕн питех те нумай приказĕсенче палăрса тăраççĕ.

Совет хулисемпе ялĕсене, районĕсемпе облаçĕсене хаяррăн çапăçса пĕрин хыççăн тепĕрне ирĕке кăларса пыракан Хĕрлĕ Çарăн ĕçĕсем çак чăннипех те хăрушă картинăна кăтартса пачĕç. Гитлерпа Герингăн тата хальхи Германин влаçа хĕсĕнсе кĕрсе кайнă ытти правителĕсен маларах кăтартнă ирсĕр планĕсене нимĕçсен фашистла çарĕ утăм хыççăн утăм туса, халиччен пулман-илтмен хаярлăхпа пурнăçа кĕртсе пырать.

Çак нотăна ярса, Совет Правительстви мĕнпур халăхсене çĕнĕ документсемпе фактсем çинчен, хăйĕн аллинчи йышлă документсемпе фактсенчен илнĕскерсем çинчен, пĕлтерет; вĕсем СССР Правительствин 1941 çулти ноябрĕн 25-мĕшĕнче тата 1942 çулти январĕн 6-мĕшĕнче янă нотисенче кăтартнă усал ĕçсем чăнах та план тăрăх пулса пынине кăтартса параççĕ çеç мар, вĕсем тата гитлерла правительсемпе вĕсене пулăшакансем Совет халăхĕсен ирĕклĕхĕ, культури çине тата пĕтĕм пурнăçĕ çине те юнлă-ирсĕррĕн тапăннипе тискерленсе тата мораль тĕлĕшпе вĕçне çитиех пăсăлса кайнине кăтартса параççĕ.

## I.
## ХАЛĂХА ÇАРАТНИ.

Хĕрлĕ Çар чаçĕсем „Германи империйĕн рейхсмаршалĕ" Геринг çырнă секретлă документа тытса илнĕ, вăл документăн ячĕ çапла: „Хĕвелтухăçĕнче **çĕнĕрен оккупацилемелли** облаçсенче экономикăна ертсе пымалли директивăсем („симĕс папка"). Çак секретлă документа, 28 страницăллă, темиçе пайран тата темĕн чухлĕ пунктсенчен тăраканскере, çакăн пек паллă туса пичетлесе кăларнă: „Берлин, 1941 çулти июнь". Гитлер правительствин çав „директивисене", çакă вăл документ текстĕнченех курăнса тăрать, шăпах Германия Совет Союзĕ çине тапăнас умĕн пичетленĕ, вĕсене „çар руководствине тата çарпа экономика инстанцийĕсене Хĕвелтухăçĕнче **йышăнса илмелли** облаçсенче экономикăллă задачăсем мĕнле пулмалли çинчен пĕлтерме" пичетленĕ. Çав „директивăсенче" („симĕс папкăра") Совет Союзĕ çине тапăнас тĕлĕшпе Германи умĕнче тăракан пысăкрах задачăсене çакăн пек палăртса панă:

„Фюрерăн (Гитлерăн) приказĕсем тăрăх, оккупациленĕ облаçсемпе çийĕнчех тата туллин Германи валли усă курмашкăн пур мерăсене те йышăнмалла. Германи валли продовольствипе нефть мĕн май килнĕ таран ытларах илмелле—çакă ĕнтĕ кампанин экономикăллă тĕп тĕллевĕ. Çакăнпа пĕрлех оккупациленĕ облаçсенчен Германи промышленноçĕ валли чĕртавар пулса тă-

ракан ытти продуктсем те памалла. Чи пирвайхи задача вăл— Германи войскисем валли оккупациленĕ облаçсенчен продовольстви парса тăрас ĕçе часрах пурнăçлассисе пулса тăрать".

Çак документра намăса пĕлмесĕр çапла каласа хунă: „Оккупациленĕ облаçсене васкаса йĕркене кĕртмелле тата вĕсен экономикине ура çине тăратмалла тесе шухăшлани пачах та вырăнлă мар. Эпир ялхуçалăх продукчĕсемпе нефтĕн чылай пысăк резервисене тупма пултарнă облаçсенче çеç йĕрке тумалла. Ыттисенче... экономикăллă ĕç—тупнă запассемпе усă курасси çеç пулмалла". („Экономикăллă тĕп задачăсем" ятлă пайран, 1-мĕшпе II-мĕш пунктсем).

Çак, тĕнче историйĕнче халиччен пулман планра, гитлеровецсем пирĕн çĕршыва организованно çаратмашкăн малтанах хатĕрлесе хунă планра—мĕнпур чĕртавара, тупнă мĕнпур тавар фончĕсене Совет Союзĕнчен Германие илсе кайма тата граждана халăха пĕр çын хăвармасăр çаратма палăртса хунă:

„Пире кирлĕ чĕртавара, çурма фабрикатсене тата хатĕр продукцие пĕтĕмпех приказсем парса, реквизицисемпе конфискацисем туса суту-илӳрен туртса илмелле". „Платинăна, магние тата каўчука çийĕнчех пуçтарса Германие ăсатмалла". („Чĕртаварсемпе тата тавар ресурсĕсемпе усă курасси" ятлă пайран, 1, Б тата В пунктсем). „Фронт çывăхĕнчи вырăнта тата тылри облаçсенче тупса палăртнă апат-çимĕçсем, ушкăнăн тата пĕччен-пĕччен усă курмалли япаласемпе тумтирсем чи малтан войскăсене пама çар хуçалăх пайĕсен аллине кĕреççĕ..., çав пайсем йышăнманнисене вара çарпа экономика инстанцийĕсен аллине параççĕ". („Войскăсене кирлĕ япаласене çĕршывăн ресурсĕсенчен парса тăрасси" ятлă пайран, 1 сыпăк, II пункт).

Çак вăрă-хурахла план тăрăх пирĕн хуласемпе ялсенче ирĕксĕрлесе ĕçлеттерес йĕрке тумалла пулнă, нимĕн хака та тăман хут укçасем кăлармалла пулнă, предприятисенче ĕçукçи тӳлессине пăрахăçламалла пулнă; çав вăрă-хурахла плана пурнăçламашкăн ятарласа хăйне уйрăм аппарат тунă, вăл аппарат çинчен çав асăннă документра тĕплĕн каланă, вăл Германи çарĕн уйрăм йышши хĕçпăшаллă пайĕ пек пулса тăрать, унăн хăйĕн „хуçалăх командованийĕ", „экономикăллă штабĕсем", хăйĕн „разведки", „инспекцийĕсем", „çар чаçĕсем", „производство хатĕрĕсем пухакан отрядсем", „чĕртавар пухакан отрядсем", „çар агрономĕсем", „ялхуçалăх офицерĕсем", т. ыт. те пур.

Совет Правительстви çакна палăртса парать: пирĕн çĕршыва пĕтĕмпех çаратмалли çак план вăл гитлерла Германия Совет Союзне хирĕç вăрă-хурахла поход тума пирĕн территори çине килсе кĕричченех хатĕрленнĕ.

Совет Правительстви кунпа пĕрлех çакна палăртса парать: Германи çарĕпе тылне кирлĕ продовольствие, чĕртавара тата промышленность таварĕсене Совет халăхĕ ĕçлесе пухнă ресурссенчен парса тăмалли вăрă-хурахла план, Совет Союзĕнче çав япаласене çăмăллăнах тупма пулать тесе шутлани енчен илсен, пĕтĕмĕшпех ăнăçсăр пулса тăчĕ, Гитлерпа Герингăн çав усал шухăшлă планне пурнăçлама пуринчен ытла Совет гражданĕсем—рабочисем, хресченсем, интеллигентсем, служащисем—хăйсен

тăван çĕршывне вĕçĕ-хĕррисĕр юратса чунтан парăнни тата вĕсем ютçĕршыв захватчикĕсене çавтери кураймманни чарса тăчĕ.

Анчах та, оккупантсем „рейхсмаршалăн“ пĕрпĕтĕм планĕ тăрăх оккупациленĕ облаçсемпе Германи валли çиййĕнчех тата туллин усă курма“, пултараймарĕç пулсан, Германин оккупациленĕ влаçĕсемпе çар командованийĕ хăйсем тытса илнĕ территорисем çинче пур çĕрте те гражданла халăха намăса пĕлмесĕр тата ытларах çаратнă, çаратаççĕ, темиçе çул хушшинче тӳррĕн ĕçлесе пухнă унăн пĕтĕм харпăрлăхне туртса илеççĕ.

Германи çарĕнчи Генеральнăй штабăн оперативнăй пайĕн ятарласа çырнă 43761/41-мĕш номерлĕ приказĕ çумне хушса хунинче çапла кăтартса панă:

„Йышăнса илнĕ облаçсенчи халăха ирĕксĕрлесе, кирек мĕнле майпа та тумтир тупас пулать. Чи малтан, çăм перчаткăсемпе тиртен тунă перчаткăсем, пальтосем, жилетсем, шарфсем, ватка хурса çĕлетнĕ жилетсемпе брюкисем, сăран атăсемпе çăматăсем, тăласем туртса илес пулать“.

Германин çапса аркатнă чылай чаçĕсем приказĕсенче Çурçĕрти Армейски группăн командованин 1941 çулти ноябрĕн 6-мĕшĕнче генерал-лейтенант Байер алă пусса салатнă 1422/41-мĕш номерлĕ çак кăтартăвне илсе пичетленĕ:

„Вырăссен гражданла халăхĕн çăматтисене, çав шутрах ачапăча çăматтисене те, пурне те халех тытса илмелле. Çăматă тăхăнса çӳреме е усрама юрамасть, уншăн, хĕçпăшала ирĕк памасăр йăтса çӳренĕшĕн айăпланă пекех, айăпламалла“ (çакăншăн айăплисене, Германири инструкцисем тăрăх, персе пăрахаççĕ).

Германи командованийĕн çавăн пек приказĕсене пула, нимĕç оккупанчĕсем мирлĕ Совет çыннисене çаратнă чухне темиçе пин çынна вĕлернисем ăнланмалла ĕнтĕ. Хĕрлĕ Çар ирĕке кăларнă территорисем çинче ак çакăн пек фактсем пулман пунктсем сайра тĕл пулаççĕ: Мускав облаçĕнчи Мало-Ярославец районĕнчи Терентьево ялĕнчен каялла чакнă чухне нимĕçсем урам варринче 78 çулти хресчене Г. П. Юргова, 70 çулти А. Чибасовăна тата 12 çулти В. Сергеева тытса чарнă та вĕсен кĕрĕк пиншакĕсемпе çăматтисене хывса илнĕ, унтан вара персе вĕлернĕ.

Курск облаçĕпе Орел облаçĕн ирĕке кăларнă чылай пункчĕсенче çапла тума хушакан приказ тупнă:

„пурлăхсене, уйрăмăнах: виçе тарасисене, михĕсене, тĕштырра, тăвара, краççина, бензина, лампăсене, кастрюльăсене, клеенкăсене, шторăсене, занавескăсене, коверсене, патефонсене, пластинкăсемпе пĕрле, комендатурăна илсе пырса памалла. Çак приказа пăхăнманнисене персе вĕлереççĕ“.

Старица хулинчи нимĕçсен комендатури пĕлтĕрхи декабрĕн 11-мĕшĕнче панă распоряженире, персе пăрахассипе хăратса халăха хăйĕн мĕнпур пурлăхне пама хушнă: „матери, кĕпе-йĕм пир, сĕтел-пукан, тумтир, атă, ботинкă, супăнь, тимĕр пайĕсем тĕрлĕрен инструментсем тата хуçалăхри урăх япаласемпе ытт тĕрлĕ материалсем“.

Мускав облаçĕнчи Истра хулинче оккупантсем елкăсене илем летмелли ача-пăчасен теттисемпе вылямалли япалисене „кон

фискациленĕ". Шаховская станцинче вĕсем ачасен кĕпи-йĕмĕсене, стена çине çакмалли сехетсене, самоварсене халăха „салатса парас" ĕç организациленĕ. Халĕ те оккупантсен аллинче тăракан районсенче нимĕç войскисем пырса çитнĕренпе чарăнмасăр туса пынă çаратăва пула йăлтах чухăнланса юлнă халăха çаплах ухтарса, çаратса пурăнаççĕ. Германи командованийĕ хăйĕн чаçĕсене тӳрех гражданла халăхсене, вăл шутрах ачасене те, хĕрарăмсене те, стариксене те, выçлăха хăварма, вĕсенчен продовольствин юлашки запасĕсене туртса илме, каялла чакнă чухне Германи çарĕ хăйпе пĕрле илсе кайма пултарайман продуктсене пурне те пĕтерсе хăварма хушать. Генерал-фельдмаршал фон Рейхенау 1941 çулти октябрĕн 10-мĕшĕнче çырса панă приказра, — вăл приказа чаплă приказ вырăнне хурса, тата Гитлер „çак приказа питех те лайăх тесе йышăнчĕ" тесе асăрхаттарса каласа, нимĕçсен пур чаçĕсене те салатнă, — халăха çаратма тата пĕтерме çакăн пек каласа хĕтĕртни пур: „Вырăнти халăхсемпе тыткăнри çынсене апат пани — кирлĕ мар гуманность пулса тăрать. Отечество хăй мĕнрен татăлса пурăнать... салтакăн çавна тăшман валли хăвармалла мар", тенĕ унта.

Гитлерăн правительстви планпа палăртса хунă вăрă-хурахла ĕçсем (Германи командованийĕ хăйĕн çарĕпе тылне çапла майпа кирлĕ япаласем тупса пама тăрăшни), пур çĕрте те сарăлнине çак фактсем палăртса параççĕ. Тула облаçĕн 25 районĕнче кăна оккупантсем Совет гражданĕсенчен 14.048 ĕне, 11.860 сысна, 28.459 сурăх, 213.678 чăх, хур-кăвакал тытса илнĕ — тата пыл хурчĕсене 25.465 çемье пĕтерсе тăкнă. Смоленск облаçĕн Дзержинск районĕнчи 15 ялсоветĕ тăрăх кăна оккупантсем колхоз пурлăхĕнчен 2.554 лаша, 1.170 ĕне, 335 сысна, 5.710 чăх тытса илсе кайнă. Кунсăр пуçне тата колхозниксен хăйсен уйрăм пурлăхĕсенчен оккупантсем 2.027 ĕне, 2.138 сысна, 5.297 сурăх, 44.159 чăх, çавăн пекех тата 5.477 мăшăр çăматă, 2.439 кĕрĕк, 3.208 ăшă тутăр, 10.431 метр матери, 3.299 мăшăр арçын кĕпе-йĕмĕ, 815 ача-пăча кĕпе-йĕмĕ, колхозăн тата колхозниксен ун чухне пулнă мĕнпур тыррине, какайне, пылне, пахча çимĕçĕсене тата ытти продуктисене, ялхуçалăх инвентарьне, çĕвĕ çĕлемелли машинисене, велосипечĕсене, çумра пулнă укçисене т. ыт. те туртса илнĕ.

Гитлер „рейхсмаршалĕн" „директивĕсем" те, Германин нумай çар чаçĕсен командованийĕсен приказĕсем те, унтан та ытларах — гитлеровецсем вăхăтлăха тытса илнĕ Совет территорийĕсенче тунă шутсăр нумай преступленийĕсем те, — çаксем пурте ĕнтĕ хĕçпăшалланнă вăрă-хурахсен çав мĕнпур усал ĕçсемшĕн пĕтĕмпех ответлă пулса тăракан, ирсĕр гитлерла правительствăн приказĕ тăрăх пирĕн çĕршыва çĕмĕрсе кĕнĕскерсен, чăн-чăн сăн-сăпатне кăтартса параççĕ.

## II.
## ХУЛАСЕМПЕ ЯЛСЕНЕ ÇĔМĔРНИ.

Германин фашистла çарĕ, хăйĕн верховнăй командованийĕ тӳрремĕнех хушнă тăрăх, Совет хулисемпе ялĕсене тытса илнĕ

чухне тата хăй унта пурăннă чухне вĕсене калама çук хытă çĕмĕрет. Совет гражданĕсен çурчĕсене, шкулсене, больницăсене, музейсене, театрсене, клубсене, тĕрлĕ обществăллă çуртсене тата ытти çуртйĕрсене çунтарса ярать, тата ытти майсемпе пĕтерет. Сăмахран, Германин 6-мĕш армине 1941-мĕш çулти октябрĕн 10-мĕшĕнче панă приказра çапла каланă:

„Войскăсен чаçĕсем тăмалли çуртсенче пушарсене сӳнтерни çеç войскăсене интереслентерет, ыттисене пурне те..., вăл шутрах çуртсене те, пĕтерсе тăкмалла".

Германи командованийĕ 1941 çулăн вĕçĕнче тата 1942 çулăн пуçламăшĕнче çакăн пек темиçе приказ та кăларнă; вĕсенче Германи çарĕн чаçĕсене Хĕрлĕ Çар хĕснипе каялла чакса пынă чухне оккупациленĕ вырăнта юлакан япаласене пĕтĕмпех пĕтерсе тăкма хушать. Нимĕçсен каялла чакса пыракан фашистла çарĕ пиншер ялсене, нумай хуласен пĕтĕм кварталĕсене тата пĕтĕм хуласене те çунтарать, сирпĕнтерсе ярать, çĕрпе танлаштарса хăварать. Совет хулисемпе ялĕсене организованно пĕтерсе пырасси нимĕç захватчикĕсен Совет территорийĕнче туса пыракан ирсĕр ĕçĕсен хăйне уйрăм отрасль пулса тăчĕ, Советсен халăхĕ пурăнакан пункчĕсене мĕнле майсемпе çĕмĕрмелли çинчен ятарласа инструкцисем çырнă тата Германи командованийĕ çав майсем çинчен тĕплĕн çырса приказсем кăларнă; çав ĕçе тума уйрăм отрядсем уйăрса хунă; вĕсене çав ирсĕр ĕçе тума вĕрентсе хатĕрленĕ.

Акă Совет Правительстви аллинчи йышлă фактсенчен хăшпĕрисем.

Германин 293-мĕш дивизин 512-мĕш полкне 1941 çулти декабрĕн 10-мĕшĕнче панă приказра çав полк тăнă районра декабрĕн 10-мĕшпе 14-мĕш хушшинче пĕр ял хыççăн тепĕрне мĕнле пĕтерсе пымалли плана питĕ тĕплĕн, çичĕ страница пысăкăш çырса панă. Çав приказра, Германин пĕтĕм çарĕнче çырса кăларнă приказсем евĕрлĕскерĕнче, çапла каланă:

„Халăх пурăнакан пунктсене çĕмĕрме çапла хатĕрлемелле: а) вĕсене çĕмĕресси çинчен пĕлтериччен гражданла халăх ăна пĕртте ан систĕр; б) сасартăк, пĕрре çапсах, палăртса хунă вăхăтра çĕмĕрмелле..., çĕмĕрме суйласа илнĕ кун, уйрăмах çĕмĕресси çинчен пĕлтернĕ хыççăн, çĕмĕрмелли пунктран гражданла çынсенчен никам та ытти çĕре ан кайтăр тесе питĕ хытă асăрхас пулать... Полк йышăнса тăракан хĕллехи хваттерсене лайăхлатас шутпа, килти япаласене, краççина, пăтасене, çатмасене, чӳлмексене, лампăсене, тенкелсене, витресене, пăявсене, михĕсене; продовольствие тытса илме тата выльăх-чĕрлĕхсене хăваласа кайма ирĕк панă..."

Германин 98-мĕш пехотнăй дивизийĕн командирĕ 1941 çулти декабрĕн 24-мĕшĕнче çырнă приказра, çунтарса яма палăртнă 16 Совет ялне кăтартса тухнă хыççăн, çапла каланă:

„Мĕнпур утта, улăма, продуктсене т. ыт. те çунтарса ямалла. Пурнакан çуртсенчи кăмакасене пурне те алăри гранатăсемпе сирпĕнтерсе йĕркерен кăлармалла, вĕсемпе урăх усă курмалла ан пултăр. Çак приказ кирек мĕн пулсан та противникăн аллине лекмелле мар."

Нимĕçсен фашистла çарĕ çак приказсене вĕçĕ-хĕррисĕр тискерлĕхпе ĕçе кĕртсе пырать, ялсене тĕппипех çунтарса ярать, хуласенче пурăнмалли çуртсене сирпĕнтерсе ярать, вĕсенче çынсен ушкăнĕсене чĕррĕнех çунтарать, хăйсен тăванĕсене çунасран çăлма тата çунакан çуртсенчен тухма ĕлкĕреймен ытти çынсене çăлма тăрăшакан Совет гражданĕсене персе вĕлерет, хăйсен пурлăхĕсен пĕр пайне те пулин çăлса хăварма хăтланакан çынсене вĕлерет. Нимĕç захватчикĕсем нумаях пулмасть хуçаланнă территори çинче темиçе вуншар километр кайсан та унта тĕрĕс-тĕкĕл тăрса юлнă çурта сайра кăна тĕл пулатăн. Германи çарĕн çав преступленийĕсем çинчен Совет Союзĕн çарпа гражданла влаçĕсем тата вырăнти халăх кăтартса çырнă йышлă документсенчен ак çак акта илсе кăтартма пулать, унта гитлеровецсем çунтарса янă 5 ял çинчен çеç каланă, анчах вăл çакă пиншер фактсене палăртса тăрать:

„Калинин облаçĕн Пеновски районĕнчи Занепреченски ялсоветне кĕрекен Занепречье ялĕнче 1942 çулти январĕн 11-мĕшĕнче çырнă акт:

1) 1941 çулти декабрĕн 12-мĕшпе 13-мĕшĕсенче Занепреченски ялсоветне кĕрекен Никишки, Занепречье, Заречье, Городцы тата Маслово ялĕсенчен мĕнпур халăха икĕ сехет хушшинче хăваласа кăларнă. Нимĕçсен салтакĕсем хуралласа пырса, çав ялсенче пурăннă çынсене противник тытса илнĕ районăн шаларахри пункчĕсене илсе кайнă; 2) çав кăтартнă ялсене тепĕр кунне пурне те çунтарса янă; Никишки ялĕнче вара 70 килĕрен 69 кил çунса кайнă, Занепречьере 50 килĕрен 39 кил, Заречьере 25 килĕрен 24 кил, Масловăра — 69 килĕрен 68 кил, Городцăра — 22 кил пурте çунса кайнă. Кунсăр пуçне халăх куçĕ умĕнчех Покровское ялне çунтарса янă, унта 42 килĕрен 12 кил çунса кайнă, çавăн пекех тата Аслă Ильинское ялне çунтарса янă, унта обществăллă икĕ çурт çунса кайнă. 3) Маслово ялĕнче хресчен Федор Антонович Морозов, унăн хĕрĕ Марья, çавăн пекех тата Галя Котова, Вера Кузнецова, Валя Покровская тата Лидия Иванова колхозницăсем хăйсен пурлăхĕсене çăлса хăварма хăтланнă, вĕсене нимĕç караулĕ тытнă та, пĕр çурта хупса питĕрсе лартнă. Унтан çав çурт çине нимĕç салтакĕсем автоматсенчен пенĕ, гранатăсем ывăтнă, вара çунтарса янă, пӳрте питĕрсе лартнисем пурте вилнĕ, Лидия Иванова анчах ăнсăртран подвала лексе çăлăнса юлнă.

Алă пуснă: Ялсовечĕн председателĕ Арсений Николаевич Зуев, колхоз правленийĕн председателĕ Иван Маркелович Маркелов, МТС трактор бригадин бригадирĕ Вера Сергеевна Павлова“.

Совет халăхĕ пурăнакан пунктсене çунтарма тата гражданла халăха пурне те пĕтерсе пыма Германи командованийĕн ятарласа тунă отрячĕсем гитлерла çар чакса пынă чухне хăйсен юнлă ĕçĕсене професиллĕ преступниксем пек пĕр çӳçенмесĕр тăваççĕ. Çапла, сăмахран, Ростов облаçĕнчи Аслă Крепинская ялĕнчен чакса каяс умĕн нимĕçсем çав ял урамĕсем тăрăх ятарласа вуткăвар сапакан машинăсем янă, вĕсем вара 1.167 çурта пĕрин хыççăн тепĕрне çунтарса тухнă, чечекленсе ларакан пысăк яла ял-

кăшса выртакан вучах туса хунă, унта вара пурăнмалли çуртсем, больницăсем, шкулсем, обществăллă çуртсем çунса кайнă. Çавăн чух автоматчиксем хăйсен çунакан çурчĕсем патне çывхаракан çынсене асăрхаттармасăрах пере-пере вĕлернĕ, хăшне-пĕрне çыхса пăрахса, бензин сапнă та çунакан çуртсем çине ывăтнă.

Гитлерла аркатса вут тĕртсе çунтараканскерсем — мĕн тери нумай çĕмĕрсе тăкнине çак даннăйсем, ытти çавăн пек йышлăн даннăйсенчен илнĕскерсем кăтартса параççĕ. Оккупантсем йышăнса тăнă Мускав облаçĕн 23 районĕнче вĕсем 537 яла пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкнă, 928 ялăн пĕрер пайне çĕмĕрнĕ, ялсенче пурăнмалли 38.423 пӳрте тата хуласенчи 5.140 çурта, 947 шкула (1.220 шкултан), 150 больницăна, 54 ача сачĕсемпе яслисене, 491 клуба, 66 пекарняна, 109 столовăя, 788 магазина, 1.053 витене, 3.160 выльăх картишне. 13.610 амбарпа сарайне, 747 подсобнăй предприятие т. ыт. те пĕтĕмпех çĕмĕрнĕ. Тула облаçĕнчи 25 районра Германи çарĕ хăй тăнă вăхăт хушшинче 316 яла, хресченсен 19.164 çуртне, 299 шкула, 2.950 авăна, амбара, витене, выльăх картишне пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă. Вырăссен авалхи хули Старица ишĕлчĕк купи пулса юлнă. Унта больницăна библиотекăна, театра, ача çуртне çĕмĕрсе тăкнă. Богородицкри 866 çуртран 534 çурта пĕтĕмпех çунтарса янă. Сталиногорскра пурăнмалли çуртсем тĕлĕшпе кăна 278 миллион тенкĕлĕх убытка тунă. Калуга хулинче оккупантсем темиçе кун хушшинче хулана урам хыççăн урам çĕмĕрсе пынă. Вырăс облаçĕсенчи ытти вуншар хуласенче те, Украинăра, Белоруссире, Молдавире, Карело-Финн ССР-ĕнче те çавăн пекех, планпа палăртнă пек, çĕмĕрсе пынă.

Германи çарĕн командованийĕ Совет халăхĕ пурăнакан пунктсене тăтăшах çĕмĕрсе пымалли çинчен панă приказа Германин пĕтĕм çарĕ пĕлсе тăрать. Гитлерăн 1942 çулти январĕн 3-мĕшĕнче панă приказĕ те çавăн пекех:

„Фюрерăн Тĕп Хваттерĕ. 1942 çулти январĕн 3-мĕш.

Фюрерăн (урăхла каласан, Гитлерăн) приказĕ:

Халăх пурăнакан кашни пунктра тытăнса тăмалла, пĕр утăм та каялла чакмалла мар, пĕр салтак юлмичченех, юлашки граната юлмиччен хӳтĕленмелле; ахă мĕн ыйтать хальхи самант. Эпир йышăнса тăракан кашни пункта опорнăй пункт туса хумалла, ăна кирек те мĕнле пулсан та, противник аякран çавăрса илнĕ пулсан та, памалла мар. Анчах çапах та çӳлерех тăракан начальство панă приказ тăрăх çак пункта пăрахса хăварма тивсен, **унта пурне те нимĕн юлмиччен çунтарса ямалла, кăмакасене сирпĕнтерсе ямалла...**

Алă пуснă: Адольф Гитлер".

Совет хулисемпе ялĕсене çĕмĕрни унăн çарĕн ĕçĕ пулса тăнине аркатуçă Гитлер пĕтĕм халăх умĕнче йышăнма вăтанмарĕ. Хăйĕн 1942 çулти январĕн 30-мĕшĕнче каланă сăмахĕнче вăл çапла каланă: „Вырăссем ăçта татса кĕрсе кайма пултарнă, ăçта вĕсем халăх пурăнакан пункта каллех йышăнса илтĕмĕр тесе шутлаççĕ, унта халăх пурăнакан çак пунктсем çук ĕнтĕ: унта ванчăксен куписем кăна".

Çапла ĕнтĕ, Германи çарĕ хăй тытса илнĕ Совет çĕрĕсене çĕмĕрсе пĕтернĕшĕн, пурăнмалли тата ытти çуртсене, предприятисене,

шкулсене, больницăсене, культурăллă учрежденисене тăтăшах çĕмĕрсе пынăшăн, çапла майпа Совет государствине тата уйрăм гражданесене кўнĕ сиеншĕн гитлерла правительствăпа командованин тулли ответ тытмаллине пĕтĕмпех документсемпе кăтартса панă тесе шутламалла.

## III.

## ССР СОЮЗĔН ОККУПАЦИЛЕНĔ РАЙОНĔСЕНЧЕ ЧУРАЛЛА-КРЕПОСТНОЙЛА РЕЖИМ ТУСА ХУНИ ТАТА ГРАЖДАНЛА ХАЛĂХА «ТЫТКĂНА» ИЛСЕ КАЙНИ.

Гитлерла правительсем тата çар командованийĕ хăйсем оккупациленĕ территорисем çинче Совет гражданĕсене пурне те чуралантарас плана пурнăçа кĕртсе пыни çинчен, хуласемпе ялсенче пурне те ирĕксĕр ĕçлеттерес йĕрке туни çинчен тата пирĕн çĕршыври мирлĕ халăхăн темиçе миллион çыннине „тыткăна лекнĕ çар çыннисен“ шутне законсăр кĕртсе, ирĕксĕрлесех Германие илсе кайни çинчен çирĕплетсе калакан документсем Совет Правительстви аллинче пур. Гитлеровецсем пирĕн çĕршыва чураллă колони туса хурасшăн.

Украинăпа Белоруссин оккупациленĕ районĕсенче нимĕçсем **промышленноçри рабочисене** ирĕксĕр ĕçлеттерес йĕрке тунă, сывлăхшăн ытларах сиенлĕ ĕçсенче те вĕсене 14—16-шер сехет хушши, нумай чухне ним тўлемесĕрех, хăшпĕр чухне мăшкăласа питĕ сахал тўлесе ĕçлеттереççĕ. Çапла, сăмахран, Киевра тата Кривой Рогра рабочисене пурне те пĕр кунхи ĕçшĕн нумай чухне Германи маркин çурри чухлĕ çеç тўлеççĕ. Çав ĕç укçипе пурăнасси выçлăхпа вăраххăн вилессине пĕлтерет.

Оккупациленĕ облаçсенчи промышленноçлă районсенче нумайăшĕнче çулйĕрсем çинчи тата тиесе-пушатас тĕлĕшри йывăр ĕçсенче, оккупантсем тунă „ĕç колонисенче“ ирĕксĕр ĕçлеттересси яланхи йĕрке пулса тăнă, унта квалификациллĕ рабочисене, техниксене тата инженерсене, ытти çынсене ĕçлеттернĕ пекех, кирек мĕнле хура ĕçе те ĕçлеттереççĕ. Оккупациленĕ районсенчи промышленноçлă предприятисен пысăк пайĕ ĕçлемесĕр тăрать. Предприятисене чылайăшне оккупантсем Германин капиталистла фирмисене параççĕ, çапла вара çав фирмăсем Совет халăхĕн харпăрлăхне хăйсен аллине илеççĕ, анчах яланхи пекех, çав предприятисене ĕçе яма пултараймаççĕ. Нумай пулмасть Германи захватчикĕсемпе вĕсен Румынири тарçисем Молдави тата Украина территорийĕсем çинчи промышленность предприятийĕсене „сутасси“ çинчен пĕлтернĕ, çакă вăл—ку предприятисене, çав шутрах вĕсенче ĕçлекен рабочисене те, нимĕçсен е румынсен капиталисчĕсен аллине парассине пĕлтерет, çав капиталист çар командованийĕпе „хак пирки калаçса татăлать“. Украинăра тата Белоруссире, чăннипе илсен, суту-илў тăвас ĕçе пĕтерсе лартнă, сайра хутра кăна питĕ хаклă хакпа килте тыткаламалли япаласене, вырăнти халăхран туртса илнĕскерсене, сутаççĕ. Днепропетровскра, Киевра тата Полтавăра уçнă нумай мар лавкасенче таварсене „Нимĕçсене кăна сутаççĕ“ тесе ятарласах вывескăсем çакнă. Германи командованийĕн инструкцийĕ тăрăх „Германи

империне кирлӗ таварсене аяккалла ярасран сыхласа хӑварас шутпа“, пасарсем тума чарнӑ.

„Хӗвелтухӑҫӗнчи облаҫсенчи чи кирлӗ задачӑсем ҫинчен“ ятлӑ инструкцире, Хӗрлӗ Ҫар чаҫӗсем 1942 ҫулхи мартра тытса илнӗскерӗнче, „Центрти фронтӑн ҫарпа экономика инспекцийӗн“ начальникӗ генерал-лейтенант Вейганг „ҫурма выҫӑ тата ҫурма ҫарамас ҫынсен ӗҫӗпе промышленность производствине тытӑнтарса пыма ҫуккине“ йышӑнать, вӑл „укҫа хакӗ йӳнелни тата таварсем ҫитменни вырӑнти халӑх Германи влаҫӗсене шанманнипе пӗр вӑхӑтра пулса пынине“, ҫавӑнпа та „ҫапӑҫакан ҫарсен тылӗнче пачах пулма тивӗҫлӗ мар япала—оккупациленӗ облаҫсемшӗн кирлӗ лӑпкӑ пурнӑҫ хӑрушлӑхра пулма пултарассине“ йышӑнать. Германи генералӗ ҫав документрах оккупациленӗ облаҫсене „пирӗн Хӗвелтухӑҫӗнчи колонисем“ тесе калама хӑюллӑх ҫитерет.

Оккупациленӗ облаҫсенче промышленность производстви пӗтӗмпех юхӑнса кайни ӗҫсӗр тӑрса юлнисен йышне ӳстерсе янине йышӑнса, Германи генералӗ Вейганг вырӑс, украинец, белорусс тата ытти вырӑнти рабочисене ирӗксӗрлесех Германие ярассиневаскатма хушса ҫакӑн пек кӑтарту парать:

„Хӗвелтухӑҫӗнчи оккупациленӗ облаҫсенчи сывлӑхлӑ тата ҫирӗп ҫынсен пысӑк резервӗсен шутӗнчи темиҫе миллион вырӑс рабочийӗсене Германие яни кӑна... ӗҫ вӑйӗ ҫав тери нумай кирлине тивӗҫтерес тӗлӗшпе вӑраха яма ҫук ыйтӑва татса пама пултарать, ҫавна тунипе кӑна Германире ӗҫ вӑйӗсем ҫав тери ҫителӗксӗррине пӗтерсе лартма май килет“. (Б. Б. (и) уйрӑм группӑна ятарласа панӑ 3-мӗш номерлӗ кӑтарту, II-мӗш пай).

Германи командованийӗпе оккупациллӗ влаҫсем пӗтӗм граждансен этемле тивӗҫлӗхӗсене ним вырӑнне те хумаҫҫӗ, оккупациленӗ облаҫсенче нихӑҫан этем илтсе-курман мӑшкӑлпа пусмӑр режимӗ тӑваҫҫӗ. Нимӗҫсен танковӑй войскисен 3-мӗш группин командованийӗн приказӗнче, Хӗрлӗ Ҫар чаҫӗсем тытса илнӗскерӗнче, оккупациленӗ облаҫсенче граждансене пурне те тӗрлӗ йывӑр ӗҫсенче ӗҫлеттерме хушнӑ, ҫав ирӗксӗрлесе ӗҫлеттернӗ ӗҫшӗн тӳлемелле мар йӗрке тунӑ. Ҫав приказрах сӗмсӗрӗн ҫапла каланӑ:

„Тӳлевсӗр ӗҫленипе халӑх хӑй халиччен саботаж туса айӑпа кӗнине тата саботаж туса малашне айӑпа кӗме пултарассине каҫарттарать“, тенӗ.

Ирӗксӗрлесе ӗҫлеттернинчен пӑрӑннӑшӑн анчах мар, выҫӑ пурӑнса вӑйсӑрланса юлнӑ ҫынсен ӗҫ тухӑҫлӑхӗ, оккупантсен шучӗпе, ҫителӗксӗрришӗн те нимӗҫсем, чуралла ӗҫлеттернипе пӗрлех, халӑхран мӑшкӑлаҫҫӗ, ӑна айӑплаҫҫӗ. Калуга хулинче 1941 ҫулти ноябрӗн 20-мӗшӗнче Германи коменданчӗ майор Портациус алӑ пусса кӑларса ҫапнӑ „Пӗлтерӳ“ акӑ мӗн ҫинчен калать:

„1. Кахалланса ӗҫлекен е кӑтартса панӑ вӑхӑт хушши ӗҫлемен граждансем ҫине штраф хураҫҫӗ. Тӳлемеҫҫӗ пулсан, вӗсене хӗнесе асаплантараҫҫӗ. 2. Ӗҫе кайма хушнӑ граждансем ӗҫе тухман пулсан, вӗсене хӗнесе асаплантараҫҫӗ тата вӗсене апатҫимӗҫ тӗлӗшпе хуларан пулӑшу памаҫҫӗ. 3. Ӗҫрен пӗрмаях

пăрăнакан граждансене Калугăран кăларса яраççĕ. Ĕçрен хăракан граждансенчен рабочи отрядсемпе колоннăсем тăваççĕ те казармăсене вырнаçтараççĕ. Вĕсене йывăр ĕçсем тутарттараççĕ".

Оккупациленĕ облаçсенчи **хресченсем** тĕлĕшпе гитлерла правительство тата командовани хăйсен умне çакăн пек тĕллев лартса, практикăра пурнăçа кĕртсе пыраççĕ: 1) Совет государстви ĕмĕрлĕхех тата тӳлевсĕрех усă курма колхозсене панă çĕре Германи оккупанчĕсен аллине илесси. Çакна тунă чухне колхозсен çĕрне те, çавăн пек уйрăм хуçалăхлă хресченсен çĕрне те „Германи Управленин ялхуçалăх отделне" параççĕ, çав ылханлă „Германи Управленийĕ" туртса илнĕ çĕре хăй мĕнле тытас тенĕ, çавăн пек тытса тăрать; 2) колхозсене пĕтересси тата „нимĕçсен управляющине" пуçлăха лартса, „Общинăллă Хуçалăхсем" тăвасси, фашистсем тунă çав „общинăллă хуçалăхсем" пулăшнипе тата „нимĕçсен управляющийĕсем". хĕненипе хресченсене ирĕксĕрлесе пĕрле ĕçлеттересси, çавăн пек ĕçленипе тунă апат-çимĕçе тата ытти ялхуçалăх продукчĕсене пухасси, çав продуктсене Германи влаçĕсен аллине парса, нимĕçсен фашистла çарĕпе тылĕ валли ярасси; 3) хресченсенчен туртса илнĕ çĕр çинче помещиксен имениĕсене тăвасси, вĕсене Германи помещикĕсен тата гитлеровецсене çывăх тăракан, ют çынсен пурлăхĕшĕн хапсăнакан „колонистсен" аллине парасси; 4) гитлерла Германире ирĕксĕр ĕçлеттерсе усă курма çĕршер пин хресченсемпе хресчен хĕрарăмĕсене ирĕксĕрлесе илсе каясси.

Шăпах çӳлте каланă пек тăваççĕ ĕнтĕ хресченсен тĕлĕшпе нимĕçсен фашистла влаçĕсемпе командованийĕ хăйсем оккупациленĕ Совет районĕсенче; вĕсем хресченсене çĕрсĕр, тата апатçимĕçсĕр тăратса хăвараççĕ. Гитлерăн тĕрлĕ ирсĕр çыннисенчен уйăрса лартнă „управляющийĕсем" хушнипе хресченсемпе хресчен хĕрарăмĕсене чуралла ĕçлеттереççĕ, колхозсенчен туртса илнĕ çĕр çине Германи помещикĕсене лартса каллех помещиксен имениĕсене тума хатĕрленеççĕ. Шăпах çакăнта пулать ĕнтĕ оккупациленĕ Совет облаçĕсене пăхса тăракан Альфред Розенберг, гитлерла правитель, патша шпионĕ пулнăскер, 1942 çулти февральте кăларнă „Çĕр законĕн" тупсăмĕ. Нимĕçсен фашистла генералĕсем хресченсене пусмăрласа ятарласа вĕрентсе хатĕрленĕ тĕрлĕ „ялхуçалăх офицерĕсем", „çар агрономĕсем" тата „Германи Управленин ялхуçалăх отделĕн" гитлерла „управляющийĕсем" пулăшнипе Советăн оккупациленĕ районĕсенче—Украинăра, Белоруссире, Латвире, Литвара тата Эстонире туса пыракан „аграрлă йĕркесем" çакăн пек ĕнтĕ.

Германи оккупанчĕсем кăларнă приказсемпе инструкцисем те, хăйсем пĕр вĕçĕмрен саракан листовкăсемпе чĕнсе каланисем те нумайĕшсем çавăн çинченех калаççĕ.

Германи командованийĕ вăрттăн кăларнă инструкцире, „Хĕвелтухăçĕнче хуçалăха ертсе пымалли принципсем" тесе ят панăскерĕнче (1941 çулти августăн 22-мĕшĕнче „Снабжени тĕлĕшпе панă уйрăм распоряженийĕ" çумне хушса пани), çапла каланă:

„Чи кирлĕ задача вăл—ытларах тĕштырă, çу кăлармалли культурăсем, тата çăмăл металсем часрах тупасси тата транспорт средствисемпе ялхуçалăх машинисене тăратасси пулса

тăрать... Руководительсене ытларах нимĕçсенчен лартма тăрăшмалла, çапла вара вĕсем ертсе пыракан предприятисем хăйсен продукцийĕсене хăвăртрах ăсатма пултарччăр... Халлĕхе колхоз системине хăварни кирлĕ, ку вăл нимĕç çарне тата хуçалăхне апат-çимĕç тăратас тĕлĕшĕнчи çитменлĕхсене вырăс уй-хирĕсен шучĕпе пĕтерме пулăшĕ".

Германин верховнăй командованийĕ „Хĕвелтухăçĕнче туртса илнĕ районсенче хуçалăха тытса пымалли çинчен кăларнă памяткăра" çапла каланă:

„Тыткăна илнĕ Хĕвелтухăç облаçĕсем Германин хуçалăх территорийĕсем пулса тăраççĕ. Çĕр, выльăх-чĕрлĕх тата ытти инвентарь... пурте Германи государствин пурлăхĕ пулса тăраççĕ".

Гитлеровецсен çав „памяткинчех" пурлăхсене тавăрса паратпăр тесе йăпатса, ĕçленĕшĕн çапла-çапла тӳлетпĕр тесе хресченсене улталамалли çинчен тата çак ĕç ăнăçлă пултăр тесен, вырăс халăхне мĕн каламалли çинчен, Германи войскисене апат-çимĕç тăратас ĕçре, тата Германие çар тата хуçалăх продукцисем тăратнă çĕрте „вырăнти халăхсен ĕçĕпе" ытларах усă курас тесен мĕн-мĕн тумалли çинчен ятарласа кăтартусем панă.

Нимĕçсем оккупациленĕ Украина облаçĕсен „имперски комиссарĕ" текенĕ Эрих Кох хăйĕн Хĕвелтухăç Пруссирен тухнă çар служащисем патне чĕнсе çырнă çырăвĕнче çав служащисене Украинăн çĕрĕсене тата ытти пурлăхĕсене валеçсе пама пулать:

„Имперски комиссар пулса тăрса, эпĕ пуян çĕрлĕ тата пуян шывлă-шурлă Украинăна илтĕм, фюрер (Гитлер) ирĕкĕпе унпа Европа усă курмалла... Фюрер мана шанса тăни сире мĕн кирлине пурне те тупса пама май парать, çак калама та çук пысăк задачăна пурнăçланă çĕрте эсир манăн чи çывăх помощниксем пулса тăмалла. Эпĕ сире пĕррехинче хамăр тытса илнĕ Хĕвелтухăç облаçĕсенче эсир пуринчен малтан предприятисем тата ĕç вырăнĕсем илетĕр тесе сăмах панăччĕ ĕнтĕ... Эсир тата сирĕн ачăрсем çав нимĕçсен юнĕпе шӳнĕ çĕр çине нимĕçле пурнăç кӳрĕр".

Çак ирсĕртен Румыни верховнăй командованийĕн ставкинчи начальникĕн помошникĕ генерал Тэтэрану та юлмасть. Вăл 1500/А номерлĕ циркулярта çакăн пек кăтарту парать:

„Хăюллă пулнăшăн тата чуна парса кĕрешнĕшĕн генерал Антонеску çак вăрçăра чапа тухнă çынсене ирĕке кăларнă территорири çĕрсене парса наградăлама шутларĕ. Çар чаçĕсем чапа тухнă офицерсен, унтер офицерсен тата салтаксен, çĕр илме тивĕçлĕ пулнисен списокне тумалла. Çав списоксенче камăн çĕр ăçта илес килнине кăтартса памалла. Списоксене çар чаçĕсем кашни вунпилĕк кунран туса пымалла".

Гитлеровецсен радио тăрăх пыракан официальнăй пропагандинче уççăнах çапла каласçĕ: „Украинăра 25 миллион колонистсем нимĕçсем тата вĕсемпе çывăх халăхсем вырнаçмалла, вĕсем нимĕнле йывăрлăхран та хăрамалла мар, мĕншĕн тесен мĕнпур йывăр ĕçсене украинецсем хăйсем туса пымалла".

Пирĕн ялта пулса тăнă, хресченсемшĕн пуян та телейлĕ пурнăç çулĕ уçнă çĕнĕ, колхозлă строя пăсма, хăйсен нимĕçле

фашистла пусмӑрлӑх йӗркине туса хума, Германи командованийӗ хресченсене чуралла-крепостнойла ӗҫлеттерсе пурӑнма хаяррӑн хӗнесе ирӗксӗрлес тӗллӗшпе „ялхуҫалӑх ӗҫӗн командисене“, „ҫар агрономӗсене“, „ялхуҫалӑх офицерӗсене“, гитлеровецсем уйӑрса лартакан „управляющисене“ тата тӗрлӗ „комендантсене“, „старостӑсемпе“ „бургомистрсене“ виҫесӗр пысӑк правӑсем панӑ. Германин ҫарӗн 8-мӗш бронетанковӑй корпусӗн штабӗ кӑларнӑ приказ ҫапла калать: „Украина ялӗнче шалти йӗркелӗхе тытса тӑрас службӑна чукмарпа хӗненипе туса пымалла...“. Харьков облаҫӗнчи Андреевка поселокӗнчи нимӗҫ коменданчӗн 1941 ҫулти ноябрӗн 9-мӗшӗнчи приказӗ ҫапла хушать: „Нимӗҫсен командованийӗ уйӑрса лартнӑ бургомистрпа унӑн распоряженийӗсене пӑхӑнасси обязательно пулмалла. Итлеменнине асаплантарса вӗлереҫҫӗ“. Харьков облаҫӗнчи Богата Черняшина ялӗнчи колхозниксем патне Германи влаҫӗсем янӑ чӗнӳре ҫапла каланӑ: „Сирӗн нимӗҫ ҫарӗ валли эрнере пилӗк кун ӗҫлемелле. Кам ӗҫе тухмасть, ӑна розгӑпа 25 хут ҫапаҫҫӗ“. Нимӗҫсемшӗн пӗтӗм вӑй хурса ӗҫлеме килӗшменшӗн нимӗҫсен командованийӗ официальнӑй йӗркепе розгӑпа 25-рен пуҫласа 30 таран ҫапассине законпа ҫирӗплетнӗ. Колхоз членӗсем тата единоличниксем массӑллӑн ӗҫе тухманшӑн Германи командованийӗн приказӗсенче карательнӑй экспедицисем ярассине пӑхса тухнӑ. Гитлерӑн тыткӑна лекнӗ салтакӗсемпе офицерӗсем ҫумӗнче оккупантсен карательнӑй отрячӗсем хресченсене хӗненине тата вӗсене массӑлӑн асаплантарса вӗлернине кӑтартакан фотографисене тупнӑ. Германи командованийӗн циркулярӗнчен тата ҫакӑ курӑнать: хӗнесе асаплантарнине пӑхса тӑмашкӑн ялти халӑха пыма хушаҫҫӗ, персе вӗлернисен тата ҫакса вӗлернисен виллисене пытарма ирӗк памасӑр темиҫе эрне хушши тытса усраҫҫӗ, ҫаксене пурне те хӑратас шутпа тӑваҫҫӗ.

Нимӗҫсен фашистла оккупанчӗсем хӑйсен тылне ирӗксӗр илсе кайнӑ Совет хресченӗсен тата ытти мирлӗ халӑхӑн йышӗ ҫӗрҫӗр пинӗн шутланать ӗнтӗ, тен, ытларах та пулӗ. Вӑрҫӑ туса пырас йӗркен тахҫантанпах йышӑннӑ законӗсене тата йӑлисене преступникла пӑсса, Германи командованийӗ гражданла мирлӗ халӑхран арҫынсене, нумай ҫӗрте тата хӗрарӑмсене те, тыткӑна илме, вӗсене тыткӑна илнӗ ҫар ҫыннисемшӗн тунӑ режима пӑхӑнтарма хӑйӗн ҫар чаҫӗсене приказ панӑ. Тыткӑнри мирлӗ халӑхшӑн ҫакӑ вӑл—чуралла йывӑр ӗҫе туса тӑрассине кӑна мар, тата нумай чухне выҫӑпа, чир-чӗрпе, хӗненипе тата массӑллӑн вӗлернипе пӗтсе пырассине пӗлтерет. Ҫапла, „тыткӑна лекнӗ ҫар ҫыннисем“ валли Минск ҫывӑхӗнче тунӑ лагерьте уҫӑ вырӑнта ҫӗр пин ҫынна яхӑн тытса усраҫҫӗ, вӗсен пысӑк пайӗ Белоруссири 15 ҫултан пуҫласа 60 ҫула ҫитнӗ арҫынсем пулаҫҫӗ, ҫав лагерьте выҫӑпа, чир-чӗрпе, хӗнемисемпе тата персе пӑрахнипе кашни кунах ҫӗршер ҫын пӗтет. Вилесене нумай вӑхӑт хушши илсе каймасӑр вырттараҫҫӗ. Тыткӑна илнисене 5—6 кун хушши апат-ҫимӗҫ, шыв памаҫҫӗ. Апат панӑ чухне те ӑна валеҫсе панӑ ҫӗрти ҫынсем кӑна илме пултараҫҫӗ, ыттисене валли ҫитмест. Апат „валеҫсе панӑ“ чухне вилнисем кашнинчех темиҫе вуншар ҫын пулаҫҫӗ. Лагерьти охрана хӑшпӗр чухне ҫӗртен пӗр

метр çӳллӗш илсе, пулеметран персе тӑма тытӑнать, çапла вара лагерьте утса çӳрекен „тыткӑнри“ çынсене ирӗксӗрех çӗр çинче хырӑмпа шуса çӳреттерсе „савӑнать“. „Тыткӑна лекнӗ çар çыннисем“ валли Киев çывӑхӗнче тунӑ лагерьте пӗтӗмпе 7.000 çын тытса усраççӗ, вӗсем хушшинче Хӗрлӗ Çар çыннисен йышӗ 15 процент çеç, ыттисем пурте Украинӑри мирлӗ çынсем, вӗсен чуралла йывӑр ӗçе туса вилсе пӗтме тивет. Ытти вуншар лагерьсенче те „тыткӑна лекнисен“ шутне кӗртнӗ гражданла мирлӗ халӑх валли çавӑн пек выçлӑхпа вилӗм режимнех туса хунӑ.

Мирлӗ халӑха ирӗксӗрлесе Германи тылне илсе каясси, нимӗçсен фашистла çарӗ наступлени тунӑ тапхӑрта анлӑн пулса, пынӑскер, уйрӑмах Германи çарӗсем чакса пынӑ чухне ытла та хаяррӑн тата массӑлӑн пулса пырать, çавна вара Германи верховнӑй командованийӗ тӳррӗмех панӑ приказ тӑрӑх туса пыраççӗ. Хӗрлӗ Çар чаçӗсем Германин аркатса тӑкнӑ чаçӗсен штабӗсенче тытса илнӗ чылай документсем хушшинче верховнӑй командованин 1941 çулти декабрӗн 6-мӗшӗнчи 2974/41-мӗш номерлӗ приказӗ пур, çав приказ тӑрӑх, оккупациленӗ вырӑнсенчи халӑх пурӑнакан пунктсенчен çитӗнсе çитнӗ арçынсене пурне те тыткӑна лекнӗ çар çыннисен лагерӗсене ямалла тунӑ. 6-мӗш дивизири 27-мӗш полка 1941 çулти декабрӗн 2-мӗшӗнче панӑ приказра, „гражданла халӑха илсе каясси çинчен“ тесе ят панӑскерӗнче, 7 ялти халӑха пӗтӗмпех декабрӗн 4—12-мӗш кунӗсенче тыткӑна илес тата ирӗксӗрлесех Германи тылне ярас тӗлӗшпе тунӑ тӗплӗ план пур. Приказӑн 7-мӗш пунктӗнче акӑ мӗн çырнӑ:

„Çак приказа хаяррӑн пулмасӑр пурнӑçа кӗртме çук. Илсе каясси çинчен халӑха пӗлтернӗ вӑхӑтран вара халӑх пурӑнакан пунктсенчен никам та тухса кайма ан пултартӑр тесе хытӑ сыхламалла“. Нимӗçсен 18-мӗш танковӑй дивизийӗнчи 101-мӗш мотополкӑн командирӗ 1941 çулти декабрӗн 12-мӗшӗнче каялла чакнӑ чухне кӑларнӑ приказра çапла каланӑ: „Хӗçпӑшал тытма пултаракан арçынсене пурне те тыткӑнри çар çыннисене пухакан пунктсене ямалла. Хӗрарӑмсемпе ачасене малти линири тӗп пунктсенчен хӗвеланӑç еннелле куçармалла, иккӗмӗш линири тӗп пунктсенчен вара пӗр-пӗр вырӑна хӑваласа пухмалла. Дивизи тӑракан участока çурран, çунапа е йӗлтӗрпе пырса кӗнӗ арçынсемпе хӗрарӑмсем çине пӗр сӑмахсӑрах пемелле“, тенӗ.

Хӑйсемпе пӗрле илсе каякан гражданла халӑха, вӑл шутрах хӗрарӑмсемпе ачасене те, Германин каялла чакакан чаçӗсем валли вӑйпах ӗçлеттереççӗ, çулйӗрсене тасаттараççӗ, снарядсем пушаттараççӗ, персе тӑнӑ вӑхӑтрах блиндажсемпе окопсене апатçимӗç леçме çӳретеççӗ, хуралçӑсем хушнӑ тӑрӑх кирек мӗнле ӗçе те тутараççӗ. Дубовцы ялӗнчи (Çурçӗр Хӗвеланӑç фрончӗ) халӑхӑн хурлӑхлӑ кунçулӗ—Германи оккупациленӗ районсенче нумайӑшӗнче пулса пыракан примерсенчен пӗри. Дубовцы ялне çунтарса яма палӑртса, нимӗçсен коменданчӗ мӗнпур халӑха çапла пӗлтернӗ: ялта пурӑнакан çынсен, вӗсене ӑсатакан нимӗç салтакӗсем мӗн хушнине йӑлтах итлесе, хӗвеланӑçнелле утмалла, 8 сехет иртнӗ хыççӑн яла юлакан çынсене пурне те персе пӑ-

рахаççĕ, тенĕ. Çак ялти 14 хресчене, хăйсен тăван вырăнĕсенчен пăрахса кайма килĕшменскерсене, вăл шутрах 7 хĕрарăма, оккупантсем персе вĕлернĕ. Ытти çынсене, вăл шутрах кăкăр ĕмекен ачаллă хĕрарăмсене те, хĕллехи вăхăтра ăшă тумтирсĕр тăратса хăварнăскерсене, нимĕçсем канма вăхăт тата апат-çимĕç памасăр, çул çинче тĕрлĕ йывăр ĕçсем ĕçлеттерсе, кĕрсе ăшăнма памасăр, хĕвеланăç еннелле хăваласа кайнă. Халран кайнă çынсем пĕрин хыççăн тепри ӳкме пуçланă, çемьи-çемьипе çул çинче шăнса вилсе пĕтнĕ, анчах çав çул çинчи ытти ялсенчен çĕнĕ çынсем пухса колоннăсен йышне тултарсах пынă. Чĕрĕ тăрса юлнисене вара çак приказа вуласа панă: „Ĕçрен пăрăнакансене Германи командованийĕ çакса асаплантарса вĕлересси çинчен асăрхаттарать". Хĕрлĕ Çар чаçĕсем питех те хăвăрт хĕссе пыни кăна чĕрĕ тăрса юлнă мирлĕ халăха çăлса хăварнă.

Мускав облаçĕн нимĕçсем йышăнса тăнă районĕсенчен çавăн пек ирĕксĕрлесе Германи тылне 6.080 çынна вăйпах илсе кайнă. Смоленск облаçĕн халĕ ирĕке кăларнă районĕсенче мирлĕ халăха кашни ялтанах е арçынсене хăйсен çемьисенчен уйăрса, е хĕрарăмсене час-часах хăйсен ачисенчен уйăрса тыткăна илсе кайнă, çавăн пек хаярлăха тата иртĕннине курман ял кунта пĕрре те çук. Çав çынсем хушшинче тăван çĕршыва каялла таврăнма пултарнисем питех те сахал. Каялла таврăннисем вара тем тĕрлĕ мăшкăл тӳсни çинчен, çав тери йывăр ĕçлеттерни, „тыткăнри" çынсем выçăпа тата асаплантарнипе массăлăн вилсе пĕтни çинчен, вăйсăрланнисене, аманнисене, чирлисене пурне те фашистсем вĕлерни çинчен каласа кăтартаççĕ.

## IV.

## НИМĔÇ ЗАХВАТЧИКĔСЕН ПУСМĂРĔ АЙНЕ ЛЕКНĔ ССР СОЮЗĔНЧИ ХАЛĂХСЕН НАЦИЛЛĔ КУЛЬТУРИНЕ ÇĔМĔРНИ.

Документсемпе фактсем çакна кăтартса параççĕ: нимĕçсен фашистла çарĕпе оккупациллĕ влаçĕсем халăха темле майпа пусмăрласси умĕнче те, этемлĕх тивĕçлĕхне, нациллĕ туйăма, ĕненĕве, шухăша тăрăхласа темле майпа мăшкăласси умĕнче те чарăнса тăмаççĕ.

Тытса илнĕ Совет территорисенчи историпе культурăн памятникĕсене вараласа ирсĕрлесси тата пĕтерсе лартасси, çавăн пекех тата Совет влаçĕ питех те нумай тунă культурăллă учрежденисене çĕмĕресси, гитлерла правительство шухăшласа хунă тата ĕçе кĕртсе пыракан тĕлĕнмелле ăссăр планăн пĕр пайĕ пулса тăрать; çав планăн тĕллевĕ—вырăссен нациллĕ культурине тата Совет Союзĕнчи халăхсен нациллĕ культурисене пĕтерсе лартасси; вырăссене, украинецсене, белоруссене, литовецсене, латвиецсене, эстонецсене тата Совет Союзĕнчи ытти халăхсене ирĕксĕрлесе нимĕçлетесси пулса тăрать. Вырăссен аслă культурине тата Совет Союзĕнчи ытти халăхсен, Совет влаçĕ вăхăтĕнче наци тĕлĕшĕнчен халиччен курман пек чечекленсе пырас çул çине тăнăскерсен, культурине пĕтерсе лартас ăссăр тĕллеве фашистла ухмахсем кăна хăйсен умне лартма пултарнă. Анчах, апла пулсан та, Германин командованийĕпе оккупациллĕ влаçĕ-

сен йышлӑ приказӗсемпе распоряженийӗсем ҫакна кӑтартса параҫҫӗ: Совет Союзӗнчи халӑхсене ҫав тери курайман пирки гитлеровецсем Совет халӑхӗсен наци тивӗҫлӗхне мӑшкӑласа таптас тӗлӗшпе тем те тунӑ, ҫапла вара Германи фашизмӗ хӑйӗн этемлӗхе курайманнин ирсӗр ӑшчиккине пӗтӗм тӗнче умӗнче кӑтартса панӑ.

Генерал-фельдмаршал фон Рейхенау панӑ паллӑ приказра Германи ҫарне вандализмла ӗҫсем тума тӳрремӗнех хӗтӗртнӗ пулнӑ, унта ҫапла шухӑш панӑ: „Хӗвелтухӑҫӗнче нимӗнле историллӗ е художествӑллӑ паха япаласене те шута илмелле мар", тенӗ. Германи 17-мӗш армин командующийӗ генерал Хот 0973/41-мӗш номерлӗ приказра хӑйне пӑхӑнса тӑракан ҫынсене ҫак идейӑна, тӑмсай фашистсемшӗн яланхи идея пулса тӑракан, этемлӗхе кураймасӑр тӑма чӗнекен идейӑна лайӑх ӑнланса илме хушать: „вырӑссене тавӑрас тата вырӑслӑхпа ҫыхӑнса тӑракан япаларан йӗрӗнес туйӑма, салтаксен ҫак вырӑнлӑ туйӑмне пусарса пырас пулмасть, йӑлтах урӑхла, ӑна ырласа ӳстерсе пырас пулать". Гитлерла правительство, йӗрӗнчӗк „рассӑллӑ идеологие" яланхи пек ӗҫе кӗртсе, хӑйӗн ҫарне вырӑс культурин, пӗтӗм тӗнчешӗн ҫав тери паха пулса тӑраканскерӗн, кирек те мӗнле палӑрӑмне курайм асӑр тӑма вӗрентет. Германин нумай офицерӗсем ҫумӗнче тупнӑ памяткӑра, „Хӗвелтухӑҫӗнче нимӗҫсем хӑйсене мӗнле тыткаламалли тата вырӑссемпе мӗнле пулмалли ҫинчен ҫырнӑ 12 заповедь" ятлӑскерӗнче, культурӑллӑ ҫынсемшӗн пачах та килӗшӳсӗр ҫакӑн пек кӑтартусем панӑ:

„Йышӑнса илнӗ районсене Германишӗн нумай вӑхӑтлӑха ҫӗнтерсе илмелле пулнӑ пирки, сирӗн ҫакна лайӑх ӑнланса илес пулать: эсир аслӑ Германин тата ҫӗнӗ Европӑн представителӗсем пулса тӑратӑр. Ҫавӑнпа та сирӗн, Германи интересӗсемшӗн кирлӗ пулсан, чи хаяр та пӗр шеллемесӗр тумалли мероприятисене тивӗҫлипе туса пымалла, унсӑрӑн эсир хӑвӑр ҫӗршывӑрта ответлӑ вырӑнсенче урӑх ӗҫлеме пултараймастӑр. Вырӑссене хӑвӑртан аякра тытса тӑрӑр. Вӗсем нимӗҫсем пулманнине, славянсем пулнине нихӑҫан та ан манӑр. Вырӑс интеллигенцийӗнчен—ҫӗннинчен те, Совет интеллигенцийӗнчен, ҫавӑн пекех эмиграциринчен те,—сыхланӑр, вӑл нимӗн тума та пултараймасть. Вырӑса эсир урӑх шухӑша ӗнентерейӗмӗр. Унпа калаҫса ан тӑрӑр, кирлине тӑвӑр".

Культурӑн паха япалисене пӗтерсе пыма йӑла тытнӑ гитлеровецсем хӑйсем оккупациленӗ Совет территорийӗнче пур ҫӗрте те кӗнекесем усрамалли ҫуртсене ҫӗмӗрсе пӗтернӗ, чылай пысӑк пайне ҫунтарса янӑ; вӗсем клубсемпе шкулсенчи пӗчӗк библиотекӑсенчен пуҫласа калама ҫук паха алҫырӑвӗсемпе кӗнекесем таранах, тӗнчере те пӗрре кӑна шутланакан япаласем таранах ҫапла аркатса ҫунтарса пӗтернӗ. Мускав облаҫӗн хӑйсем вӑхӑтлӑха йышӑнса илнӗ территорийӗнче оккупантсем 112 библиотекӑна, 4 музея тата 54 театрпа кинотеатра ҫӗмӗрсе, ҫаратса пӗтернӗ. Гитлеровецсем чаплӑ Бородино музейне ҫаратса пӗтернӗ, кайран ҫунтарса янӑ; ҫав музейӑн 1812 ҫулта Наполеон ҫарне хирӗҫ кӗрешни ҫинчен калакан историллӗ реликвийӗсем вырӑс халӑхӗшӗн уйрӑмах паха пулса тӑраҫҫӗ. Полотняный завод, по-

селокĕнче оккупантсем А. С. Пушкинăн çуртне-музейне çаратса пĕтернĕ те унтан çунтарса янă. Калугăра гитлеровецсем вырăссен чаплă ученăйĕ К. Э. Циолковский чаплă ĕçсем туса пурăннă çуртăн музейăн экспоначĕсене тимлесех çĕмĕрсе пĕтернĕ, К. Э. Циолковскин аэронавтика тĕлĕшпе тунă паха ĕçĕсене пĕтĕм тĕнчипе пĕлсе тăраççĕ. Циолковскин портречĕ çине фашистла вандалсем револьвертен пенĕ. Дирижабльсен калама çук паха моделĕсене, чертежсене, приборсене таптаса ватса пĕтернĕ. Музейăн пĕр пӳлĕмĕнче чăх вити тунă, сĕтел пуканĕсене çунтарса янă. Совет Союзĕнчи ялхуçалăхĕн чи паха учреждениĕсенчен пĕрне—Орел облаçĕнчи Шатиловкăри селекци станцине оккупантсем пĕтерсе тăкнă, çав станцин 55 çуртне, çав шутра агрохими лабораторийĕпе ытти лабораторисене, музея, 10 пин томлă библиотекăна, шкула тата ытти çуртсене сирпĕнтерсе, çунтарса янă.

Украинăпа Белоруссире гитлеровецсем культура учреждениĕсемпе истори памятникĕсене тата ытларах тискеррĕн аркатса пынă. Белоруссире оккупантсем Наукăсен академине аркатса тăкнă, çаратса пĕтернĕ, çав академире историллĕ документсемпе кĕнекесен сайра тĕл пулакан коллекцийĕ пулнă; Горецки ялхуçалăх академине аркатса çаратса пĕтернĕ; çак академи нумай пулмасть хăйĕн çĕр çулхи юбилейне уявласа ирттернĕччĕ. Çĕршер шкулсене, клубсене, вуншар театрсене, музыка учрежденийĕсене тата халăх пултарулăхĕшĕн сайра тĕл пулакан япаласене пĕтерсе тăкнă. Гитлерла вандалсем Украина историйĕн, культурин тата искусствин памятникĕсенчен вĕçĕ-хĕррисĕр мăшкăланă. Украина халăхĕн наци тивĕçлĕхне таптама ялан тăрăшнине палăртса паракан тĕслĕх выранне çакна илсе кăтартсан та çитет: Харьковри Короленко ячĕпе тăракан библиотекăна аркатса тăксан, фашистсем, хăйсен автомобилĕсене çӳреме аван пултăр тесе, пылчăклă урама çав библиотекăри кĕнекесемпе сарса тухнă.

Совет Союзĕ çине тапăнса, гитлерла правительство çапла шухăшланă: Совет çĕрĕ çинче Германи çарĕ илсе килекен, анчах та пĕтĕм тĕнчери культурăллă халăхсем йĕрĕнсе сирсе пăрахакан раса теорийĕн ирсĕр идейипе практикине сарса çирĕплетсе лартма пулĕ, тенĕ. Гитлеровецсем хăйсен фашистла тăмсайлăхне пула çапла шухăшланă: СССР çине тапăнса, Совет Союзĕнчи халăхсене пĕр-пĕринчен уйăрса яма пулĕ, Совет Союзĕнчи халăхсен тăванла пĕрлешĕвне çĕмĕрме, пĕрерĕн-пĕрерĕн çĕмĕрсе чуралантарса пыма пулĕ, ирĕклĕ Совет халăхĕсен нациллĕ культурине пĕтерсе лартма тата пирĕн çĕршывăн халăхĕсене нимĕçлетмелли хăйсен ăссăр, тăмсайла планне пурнăçа кĕртме пулĕ, тесе шутланă. Герингăн маларах кăтартнă „симĕс папкинче“ („Вырăнти халăх“ ятлă II-мĕш пайра) фашистсем хăйсен çав планне çапла çырса кăтартнă:

„Балтика таврашĕнчи çĕршывсенче Германи органĕсен нимĕçсем çине таянса ĕçлес пулать; литовецсем, эстонецсем, латвиецсем тата вырăссем хушшинчи хирĕçӳсемпе Германи валли усă курас пулать... Белоруссире ĕнтĕ белоруссем вырăссенчен, еврейсенчен тата поляксенчен ăстăн тĕлĕшĕнчен кайра тăнине шу-

та илес пулать... Кăнтăрта украинецсемпе великоруссем хушшинче пулма пултаракан хирĕçӳсемпе хамăр валли усă курас пулать... Кавказра унта авалтан пурăнакан грузинсем, армянсем, тутарсем тата вырăссем хушшинчи хирĕçӳсемпе хамăр валли усă курас пулать, армянсем пире ытла та кăмăлламаннине асра тытас пулать..."

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем Совет Союзĕнчи халăхсем хушшинче нациллĕ хирĕçӳ сарма пулĕ, çапла майпа пирĕн çĕршыва Германи фашизмĕ валли çаратса эксплоатацилесе пурăнассине çăмăллатма пулĕ, тесе шутланисем пурте ахалех пулчĕç, çакăн пек çăмăлттайла шутланисем пурте пĕтĕмĕшпех пĕтсе ларчĕç, çапла вара Совет Союзне хирĕç тунă гитлеризмăн юнлă походне те путланса лармалла туса хучĕç.

Гитлерла оккупантсем Совет халăхĕн турра ĕненекен пайĕн тĕн тĕлĕшĕнчи туйăмĕсене те шеллесе тăмаççĕ. Вĕсем Совет территорийĕнче çĕршер чиркĕве çунтарса ячĕç, çаратса пĕтерчĕç, сирпĕнтерсе ячĕç, вараласа пĕтерчĕç; çав шутра вĕсем авалхи чиркӳ архитектурин урăх тĕл пулман памятникĕсене те хăшне-пĕрне пĕтерсе тăкрĕç. Мускав облаçĕн 13 районĕнче оккупантсем 42 чиркĕве çĕмĕрсе тăкнă, вырăссен авалхи хулинче Старицăра гитлеровецсем XVI ĕмĕрте туса лартнă монастыре çунтарса янă; унăн çурчĕсенче Хĕрлĕ Çарăн наступлени туса пыракан чаçĕсем тыткăна лекнĕ красноармеецсен виллисене тупнă, фашистсем тыткăнри красноармеецсене асаплантарса вĕлерсе, çарамаслантарса вутă купаланă пек купаланă пулнă.

Амвросий Иванов пуп Мускав облаçĕнчи Иклински ялĕнчен çапла çырать:

Нимĕçсем киличчен пирĕн чиркӳ пĕтĕмпех йĕркелĕччĕ. Нимĕç офицерĕ мана чиркӳри япаласене пурне те унтан илсе тухма хушрĕ... Çĕрле войскăсем килчĕç те чиркĕве йышăнчĕç, лашасене кĕртсе ячĕç... Чиркӳре мĕн пуррине пурне те çĕмĕрме, нарăсем тума тытăнчĕç. Мĕн пуррине пурне те: престола, патша хапхине, чиркӳ ялавĕсене, плащаницăна кăларса ыватрĕç. Пĕр сăмахпа каласан, чиркӳрен вăрă-хурахсен çурчĕ туса хучĕç".

Верейăри собора оккупантсем малтан çаратса пĕтернĕ, унти мĕнпур япаласене илсе кайнă, кайран çав собортан çынсене тĕпчесе пĕлнĕ чух асаплантармалли çурт туса хунă; нимĕçсем тарнă хыççăн унта красноармеецсен таткаласа пĕтернĕ 26 виллине тупнă. Троицкое ялĕнчи чиркӳрен нимĕçсем ризăсене илсе кайнă та вĕсемпе хăйсен лашисене витсе пурăннă. Гостешево ялĕнче нимĕçсем чиркĕве çаратнă, ялавĕсене хуçса пĕтернĕ, кĕнекисене сапаласа пăрахнă, Михаил Страхов пупа çаратнă та хăйсемпе пĕрле тепĕр района илсе кайнă. Можайск çывăхĕнчи Холм ялĕнче нимĕçсем 82 çулти пупа çаратнă, хĕнесе пĕтернĕ; Можайскран каялла чакнă чухне нимĕçсем Вознесенипе Троица чиркĕвĕсене тата Николай Чудотворец соборне сирпĕнтерсе янă. Нимĕçсем хăйсем тухса каяс умĕн çунтарса янă ялсенчи халăхăн пĕр пайне пуринчен ытла çав чиркӳсене хăваласа кĕртеççĕ, унтан вăл чиркӳсене, унта питĕрсе лартнă çынсемпе пĕрлех, çунтарса яраççĕ.

Нимĕç фашисчĕсем тата вĕсене пулăшакансем тăвакан ирсĕр

преступленисен вӗҫӗ-хӗрри те ҫук. Гитлерла ирсӗрсем пирӗн тӑван ҫӗршывра хӑйсем пуҫпулса тӑрассине вӑйпа ҫирӗплетсе лартас тесе теменле преступлени те тӑваҫҫӗ.

Ҫаксем пурте акӑ мӗн ҫинчен калаҫҫӗ: преступниксен банди, Гитлерӑн правительстви тенӗскер, пирӗн халӑха ҫаратасшӑн анчах мар, тунӑ хуласемпе ялсене ҫӗмӗрсе тӑкасшӑн анчах мар, Совет Союзӗнчи халӑхсен аслӑ культурине пӗтерсе тӑкасшӑн анчах мар, вӑл тата Совет халӑхӗсене чуралантарма пирӗн чаплӑ тӑван ҫӗршыва фашистсем чуралантарнӑ колони туса хума тӑрӑшать.

## V.

## ОККУПАЦИЛЕНӖ СОВЕТ РАЙОНӖСЕНЧИ МИРЛӖ ХАЛӐХА ТИСКЕРРӖН АСАПЛАНТАРНИ ТАТА ПУСМӐРЛАНИ.

Хӑйӗн халӑхне пусмӑрласа ҫӗкленнӗ гитлерла ушкӑн Европӑри ҫӗршывсенче, гитлерла Германия вӑхӑтлӑха оккупациленӗскерсенче, халӑха халиччен этем илтмен-курман хаярлӑхпа тыткалать; анчах та Совет территорийӗ ҫине ҫӗмӗрсе кӗнӗ чухне Германи ҫарӗ ҫав хаярлӑхран та нумай ытларах хаярлӑх кӑтартрӗ. Гитлеровецсем мирлӗ Совет халӑхне тискеррӗн тыткалани этемлӗх историйӗн тата тӗнчери халыхи вӑрҫӑн чи юнлӑ ӗҫӗсенчен те иртсе каять, ҫакӑ вӑл фашистсен вырӑссене, украинецсене, белоруссене тата Совет Союзӗнчи ытти халӑхсене вӗлерсе пӗтерме тунӑ юнлӑ преступленилле планӗсене пӗтӗмпех тӑрӑ шыв ҫине кӑларать.

Мирлӗ Совет ҫыннисене вӗлерсе пӗтерме хушакан Германи командованийӗн приказӗсемпе инструкцийӗсем фашистсен ҫав питех те тискер планӗсенчен тухса тӑраҫҫӗ те ӗнтӗ. Сӑмахран, Германин верховнӑй командованийӗ кӑларнӑ „Противникӑн гражданла халӑхне тата тыткӑна лекнӗ ҫынсене мӗнле тыткаламалла“ ятлӑ инструкци ҫапла калать: „Гражданла халӑха ним шеллемесӗр тыткаламалла, унсӑрӑн офицерсем ответ тытаҫҫӗ“ тет, вара ҫакӑн пек тума хушать: „Халӑхӑн пӗтӗм массине вӑйпа тӑна кӗртмелле“, тет. Германи командованийӗ Белоруссии территорийӗнчи оккупациллӗ влаҫсем патне янӑ инструкцире ҫапла каланӑ: „Нимӗҫсен хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсене тата вӗсен организацийӗсене хирӗҫ тӑракан халӑха кирек мӗн тунӑшӑн та вӗлермелле. Кам красноармеецсене е партизансене пытарать, ӑна вӗлермелле. Партизана тупаймасан, халӑх хушшинчен заложниксем суйласа илмелле. Партизансене е вӗсене пулӑшакансене 24 сехет хушшинче илсе пымасан, ҫав заложниксене ҫакса вӗлермелле. Кун хыҫҫӑнхи талӑксенче заложниксене икӗ хут ытларах хисеппе ҫакса вӗлермелле“.

Феодоси хулин нимӗҫ коменданчӗ Эбергард капитан панӑ 431/41-мӗш номерлӗ приказӑн ҫиччӗмӗш пунктӗнче ҫапла каланӑ:

„Тревога вӑхӑтӗнче урама тухакан кашни гражданина персе вӗлермелле. Тухакан граждансен ушкӑнӗсене ҫавӑрса илес пулать те пӗр шеллемесӗр персе пӑрахмалла. Вожаксене тата хӗтӗртекенсене халӑх умӗнче ҫакса вӗлермелле“.

Германин 260-мӗш пехотнӑй дивизине гражданла халӑха мӗн-

ıткаламалли çинчен кӑтартса панӑ инструкцире хӑшпӗр офицерсене: вӗсем „пур çӗрте те кирлӗ пек хаяр пулманшӑн, астутарса хӑварнӑ“.

Совет хулисемпе ялӗсенче оккупантсем кӑларса çакакан приказсенче кирек мӗнле сӑлтавсемшӗн те вӗлермелли çинчен калана: пилӗк сехет иртсен урама тухнӑшӑн, ют çынсем çӗр выртнӑшӑн, красноармеецсене тытса паманшӑн, пурлӑха паманшӑн, халӑх пурӑнакан пунктра, çунтарса яма палӑртнӑскерте, пушара сӳнтерме хӑтланнӑшӑн, халӑх пурӑнакан пӗр пунктран тепӗрне куçса кайнӑшӑн, ирӗксӗрлесе ӗçлеттернипе килӗшменшӗн тата ыттишӗн те. Кун çумне тата çакна хушса каламалла: нумай чухне оккупантсем нимӗнле приказра та кӑтартса паман сӑлтавсемпех персе вӗлереççӗ, пуринчен ытла Совет çыннисене хӑратмашкӑн е ятарласах пӗтерсе тӑкас тесе, цивилизациллӗ çын пӗлмен туйӑма, юн ӗçес туйӑма канӑçтарас тесе вӗлереççӗ; çак туйӑма Германи çарӗнче гитлеровецсем юриех аталантараççӗ, ырласа хавхалантараççӗ.

Гитлерла оккупантсем пулнӑ пур хуласенче те, пур ялсенче те тенӗ пекех вӗсем чи малтанах Совет учрежденийӗсемпе предприятийӗсен работникӗсене, партизансене тата вӗсемпе çыхӑну тытаççӗ тесе шутланӑ çынсене халӑх умӗнче çакса е — персе вӗлернӗ. Гитлерӑн çарӗ хӑш чухне çакӑн пек туса та вӗлерет: Ленинград облаçӗнчи Сольцы хулинче, партизансене кӑмӑлласçӗ тесе Агеев учительпе Таранов çамрӑка шалçа çине чиксе лартса вӗлернӗ, виллисене вара икӗ эрне хушши шалçа çинчен илме ирӗк паман. Çакӑн пек тискеррӗн вӗлерни пирӗн вӑхӑтра пачах тӗлӗнмелле япала пулса тӑрать.

Ялсемпе саласенче Совет хресченӗсемпе хресчен хӗрарӑмӗсене—колхозниксемпе единоличниксене, совет интеллигенцине асаплантарса вӗлернӗ чухне гитлерла палачсем этем илтмен-курман асаплантармалли майсем шутласа кӑлараççӗ. Çапла, сӑмахран, Тула облаçӗнчи Дубенски районри Протасово ялӗнче гитлеровецсем колхоз председательне Морозов хресчене ним юлмиччен çарамаслантарнӑ та пӗр талӑк хушши сивӗ çуртра чӗркуççи çинче тӑратнӑ, кун хыççӑн ӑна ял тӑрӑх илсе çӳренӗ, кайран вара ӑна пилӗк таран çӗре алтса лартнӑ, ун виллине эрне хушши пытарма ирӗк паман. Курск облаçӗнчи Черемисиновски районри Покровски ялсоветӗнче фашистсем А. Н. Алехин хресчене çарамаслантарса хӑйне валли шӑтӑк чавтарнӑ, шӑтӑк виçине пӗлес тесе, ӑна темиçе хут шӑтӑкра вырттарса пӑхтарнӑ. Шӑтӑка чавса çитерсен, Алехинӑн аллисене хуçнӑ, хӑлхисене касса татнӑ, куçӗсене чиксе шӑтарнӑ, вара персе пӑрахнӑ. Орел облаçӗнчи Должански районри Донец ялӗнче гитлеровецсем 17 çулти Надежда Мальцевӑна çыхса пӑрахнӑ та унӑн амӑшне, Мария Мальцевӑна, хӑйӗн хӗрне улӑмпа витсе вут тивертсе яма хушнӑ. Амӑшӗ тӑнран кайса ӳкнӗ. Вара гитлеровецсем хӗрачана хӑйсем улӑмпа витнӗ те вут тивертсе янӑ. Амӑшӗ тӑна кӗрсен, вут çине ывтӑнса хӑйӗн хӗрне туртса кӑларнӑ. Прикладпа çапса гитлеровецсем амӑшне вӗлернӗ, хӗрне вара персе пӑрахнӑ та çулӑм çине ывӑтнӑ.

Германин урса кайнӑ оккупанчӗсене йӗркеллӗ пулма чӗнни

усăсăр. Германи влаçĕсем пусмăрлани çинчен вырăнти халăх жалобăсем панине яланах „большевикла пропагандăпа“ е „партизансене пулăшнипе“ танлаштараççĕ, жалоба паракансене часчасах персе пăрахаççĕ. Мускав облаçĕнчи Солнечногорск районĕнчи Овсянниково ялĕнчи хресчен хĕрарăмне Устиновăна, 5 ача амăшне, вĕлерни çавăн пек тĕслĕхсенчен пĕри пулса тăрать; вăл хăйĕн сивĕпе асапланакан ачисен тумтирĕсене, оккупантсем илсе кайнăскерсене, хăйне тавăрса пама ыйтса нимĕçсен штабне пынă пулнă. Устиновăна нимĕç офицерĕ штаб çурчĕ умĕнчех персе вĕлернĕ. Устинова çав çурта хăйĕн ыйтăвĕпе пынă пулнă.

Каялла чакса пыракан гитлерла захватчиксем хĕлле халăх пурăнакан пунктсене хăйсем çунтарса янă хыççăн Совет хĕрарăмĕсене, ачасене тата стариксене уйхирсемпе вăрмансене хăваласа кайнă, унта выçă пурăнса, шăнса нумай пиншер Совет хĕрарăмĕсем, ачасемпе стариксем вилсе пĕтнĕ. Гитлерла оккупантсем мирлĕ халăха асаплантарнин, масси-массипе вĕлернĕ спискин вĕçĕ-хĕрри çук. Асаплантарса вĕлерни яланхи пекех питех те хаяррăн пулса иртет: ачасене ашшĕ-амăшĕсем умĕнчех хĕнесе пĕтереççĕ, ашшĕ-амăшĕсене вĕсен ачисем умĕнче хĕнеççĕ, çынсене шыраса тупса гранатăсемпе, пулеметсенчен персе, вутта пăрахса вĕлереççĕ, чĕррĕнех çунтарса яраççĕ, чĕрĕллех пытараççĕ, сивĕ çĕрте шыв сапса тăрса çынсенчен пăрлă юпасем туса хураççĕ, çын виллисене касса чиксе пĕтереççĕ, чĕрĕ тата вилнĕ çынсенчен те мăшкăлаççĕ, вĕсене юн чусти туса хураççĕ. Хуласенчи пиншер çынсене персе вĕлереççĕ, пĕтĕм ялсенчи халăхсене пĕр çын юлмиччен пĕтерсе тăкаççĕ. 1942 çулти январĕн 7-мĕшĕнче Смоленск облаçĕнчи Козельски районри Побуж ялĕнчи 110 мирлĕ граждансем — 9 старик, 51 хĕрарăм тата 50 ача питех те йывăр хĕнхур курса вилнĕ, вĕсене фашистсем çĕçĕсемпе касса ваклані, штыксемпе чикнĕ, вĕсем çине гранатăсем пăрахнă, автоматсемпе пулеметсенчен пенĕ. 1942 çулти мартăн 15-мĕшĕнче пĕлтернĕ тăрăх, каялла чакакан гитлеровецсем Орел облаçĕнчи Лыково ялĕнчи хресченсене çавăн пекех тискеррĕн вĕлерсе пĕтернĕ хыççăн, унта мирлĕ пурăннă 730 çынран 50 çын кăна чĕрĕ сыхланса юлнă. Мускав облаçĕнчи Лотошински районри ялсенче гитлеровецсем колхозниксен 13 çемьине чĕрĕллех çунтарса янă. 153 колхозницăпа колхознике çакса асаплантарса вĕлернĕ, 507 çынна, вăл шутрах нумай хĕрарăмсемпе ачасене, персе вĕлернĕ. Новозыбково хулинче оккупантсем пĕр кăç хушшинчех 380 çемьене—стариксене, хĕрарăмсене, çул çитмен ачасене 1000 çынна ытла вĕлернĕ, вуншар ачасене чĕрĕллех çĕре алтса пытарнă.

Хăйсене ирĕке кăларасса кĕтекен вырăс ялĕсенчен, Украина, Белоросси, Молдави, Латви, Литва, Эстони, Карело-Финн республикисенчи хуласемпе ялсенчен те çавăн пек тискер те юнлă ĕçсем туни çинчен калакан çĕршер хыпарсем килеççĕ. Çапла, сăмахран, Украинăри Полтава облаçĕнчи Гадяч тата Зеньково хулисенчен çавтери тискеррĕн асаплантарса вĕлернĕ 280 гражданин çинчен нумаях та пулмасть пĕлтерчĕç, вĕсен виллисене гитлеровецсем шăтăка пăрахнă, асаплантарса вĕлернĕ ашшĕ-амăшĕсемпе пĕрле чĕрĕ ачасене те çавăнтах пăрахса пытарнă. 1942

çулти январь уйăхĕнче кăна Харьков хулинчен 370 заложнике— украинецсемпе вырăс служащийĕсене, интеллигенци представителĕсене Украинăри партизансен ĕçĕсемшĕн асаплантарса вĕлерни çинчен калакан хыпарсем килчĕç.

Гитлеровецсем Феодоси хулинчи мирлĕ халăха пĕр пин çынна ытла, вăл шутрах Крымри 245 тутара, вĕлерни гитлерла тискер ĕçсен юнлă списокне яланлăхах кĕрсе юлать. Кăкăр ачиллĕ амăшсене, стариксене, йывăр çын пулнă хĕрарăмсене, çул çитмен ачасене вуншар грузовиксем çине лартса хуларан илсе тухса кайнă та, пĕр айăпсăр мирлĕ çынсене шăтăк патне ушкăнăн-ушкăнăн илсе пырса, пулеметсенчен персе вĕлернĕ. Персе пăрахнă хĕрарăмсемпе ачасене, вăл шутрах вилсе каяйман çынсене те, çĕр сапса пытарнă.

Гитлеровецсем 1941 çулти октябрĕн 27-мĕшĕнче Таганрог хулинче 3.000 çын ытла вĕлернĕ. Германи командованийĕ хушнă тăрăх, хулари çак çынсем хăйсемпе пĕрле, оккупантсем хушнине итлесе, виçĕ кунлăх продовольстви илсе, хăйсен пĕтĕм çемьисемпех шкул çурчĕ патне пынă. Гитлеровецсем вĕсен продовольствине туртса илнĕ те хăйсене хула тулашне хăваласа кайнă, унта халăх ушкăнĕнчен çĕр çынна яхăн суйласа илсе, вĕсене темиçе вунă метр хушши аяккалла илсе кайнă та ыттисен куçĕ умĕнчех автоматсенчен персе вĕлернĕ. Кун хыççăн арçынсемпе хĕрарăмсене, ачасемпе стариксене çĕршерĕн-çĕршерĕн суйласа илсе персе пăрахма тытăннă.

Пирĕн чаçсем Керчь хулине ирĕке кăларнă хыççăн Совет çĕрĕ çинче Германи çарĕ тăвакан чи юнлă преступленисенчен пĕрин çинчен—вырăнти 7.000 çынна ытла персе пăрахни çинчен тĕплĕн пĕлнĕ. Германи комендатури хулара çыпăçтарса тухнă 4-мĕш номерлĕ приказ тăрăх вĕсене улталаса Сенная площадьне чĕнсе пухнă та унта арестленĕ, вара хула тулашне илсе кайса пулеметсенчен персе вĕлернĕ.

Туллимар даннăйсем тăрăх, Белоруссин виçĕ хулинче кăна нимĕç оккупанчĕсем мирлĕ халăха 28.000 çынна ытла асаплантарса вĕлернĕ: Витебскра—6.000 çынна, Пинскра—10.000 çынна, Минскра—12.000 çынна ытла вĕлернĕ.

Украина хулисенче темиçе çĕр пин украинецсем, вырăссем, еврейсем, молдавансем тата ытти нацири мирлĕ граждансем Германи палачĕсен аллинчен вилнĕ. Пĕр Харьковра кăна гитлеровецсем оккупацин малтанхи кунĕсенчех 14.000 çынна персе вĕлернĕ.

Вĕçĕ-хĕррисĕр нумай фактсем çакăн çинчен калаççĕ: гитлерла бандитсем вăхăтлăха тытса илнĕ Совет территорийĕсенче хĕрарăмсенчен мăшкăласа асап кăтартнине Германи командованийĕ ырлать, вăл хăй çавнашкал ашкăнма ирĕк парать. Гитлеровецсем хăйсем мăшкăл кăтартнă хĕрарăмсене чылайĕшне вĕлереççĕ, Германи çарĕ валли уçакан аскăнлăх çурчĕсене кайма килĕшмен хĕрарăмсемпе хĕрсене вĕлереççĕ. Калугăра темиçе Совет хĕрарăмĕ, офицерсен тата салтаксен аскăнлăх çурчĕсене ирĕксĕр илсе пынăскерсем, çав мăшкăла чăтаймасăр хăйсене хăйсем вĕлернĕ. Ленинград облаçĕнче Чудовски районра, нимĕçсем çунтарса янă Масленко ялĕнче шăнса вилнĕ 8 виле тупнă. Вĕсем—

хĕрарăмсемпе хĕрсен виллисем. Гитлеровецсем хĕрарăмсемпе хĕрсене ирĕксĕрленĕ хыççăн пере-пере пăрахнă, сăмсисене каса-каса илнĕ, пичĕсене ним паллами касса-çурса пĕтернĕ, хырăмĕсене штыксемпе çурнă. Могилев облаçĕнче белоруссен ялĕнче—Холмра гитлеровецсем 15 çултан пуçласа 17 çула çитнĕ 6 хĕрачана тĕл пулнă та, вĕсене тытса намăслантарнă, кайран кăкăрĕсене касса илнĕ, куçĕсене тĕртсе шăтарнă, вара вĕлернĕ. Пĕр çамрăк хĕре—Аксенова колхозницăна йывăççен тăррисене авса пуç хĕрлĕ çакнă та çурмаран çурнă. Çак фактсем вĕсем ирсĕр преступленисен хăшпĕр тĕслĕхĕсем кăна-ха. Хĕрлĕ Çар оккупантсенчен ирĕке кăларнă хуласемпе ялсенче палăртнă çавнашкал ирсĕр ĕçсем темиçе пине çитеççĕ.

Нимĕççен фашистла командованийĕ хĕрарăмсемпе пĕчĕк ачасене вĕлерме чармасть кăна мар, çапла тума уççăнах хăй сĕнет. Ачасене организованно вĕлерес ĕçе хăшпĕр приказсенче партизанла движение хирĕç кĕрешмелли ĕç пек туса кăтартнă. Сăмахран, нимĕççен 25-мĕш дивизин командирĕн—генерал-лейтенант фон Бешниттăн 1941 çулти декабрĕн 2-мĕшĕнче кăларнă приказĕнче „стариксем, хĕрарăмсем тата тĕрлĕ çулти пĕчĕк ачасем" Германи линийĕ хыçĕнче çӳренине „калама çук юрăхсăр япала" тесе хак панă. Унта çапла тума хушнă: „Гражданла çынсенчен кам та кам малти лини патне çывхарать, çав çынна, **вăл хăть арçын, хăть хĕрарăм, хăть ватă, хăть çамрăк** пултăр, — ним кăшкăрса систермесĕрех персе пăрахмалла". „Ют çынсене, уйрăмăнах ачасене курсан, çийĕнчех вырăнти комендантсене систермелле", вара кашниех, „шпионаж ĕçĕпе çыхăннă çын пек туйăнсан, çавăнтах персе пăрахмалла. Çак ĕçе туса пырас ответлăха бургомистрсем çине хумалла".

Оккупантсем ачасене тата çамрăксене питех те тискеррĕн асаплантараççĕ. Мускав облаçĕн халĕ ирĕке кăларнă районĕсенче гитлеровецсем асаплантарса чăлах туса хăварнă 160 ача Мускав хулинчи Русаков больницинче сываласçĕ. Çав ачасенчен пĕри—Ваня Громилов, 14 çултискер, Новинки ятлă ялтан. Çав ачана гитлеровецсем чĕн пиçиххисемпе тенкел çумне çыхса хунă та тутăхса пĕтнĕ пăчкăпа касса сылтăм аллине татнă. Курск облаçĕнчи Крюково ялĕнчи 12 çулти Ваня Крюковăнне икĕ аллине те касса пăрахнă, хăйне вара, юнланса пĕтнĕскерне, Совет войскисен еннелле хăваласа пынă.

1942 çулти январĕн 9-мĕшĕнче эсесоветсем (фашистла хурал отрячĕсен салтакĕсем) Хĕрлĕ Çар хăйсене каялла хăваласа ярас умĕн Калинин облаçĕнчи Ксты ятлă ялта пур стариксене те, хĕрарăмсене тата ачасене вăйпах ял тулашне хăваласа тухнă. Вара амăшсен куçĕ умĕнчех ачисене пĕрин хыççăн тепĕрне тискеррĕн асаплантарса вĕлерме тытăннă. Пĕр эсесовецĕ хресчен хĕрарăмĕн Гарзовăн аллинчен икĕ çулти ывăл ачине туртса илнĕ те, амăшĕ куçĕ умĕнчех юпа çумне çапса, ачан пуçне ватса пăрахнă, унăн икĕ хĕрачине вара, 6 тата 7 çултискерсене, персе вĕлернĕ. Ытти ачасене те çав шăпах тивнĕ. Çакăн хыççăн хĕрарăмсемпе стариксене 70 çынна яхăн пĕр сарая хупнă та вут тивертсе çунтарнă.

Смоленск облаçĕнчи Потапово ялĕнче гитлеровецсем 2 çурта

хăвăрт çурăлман минăсем лартнă. Çав çуртсене хĕрарăмсемпе ачасене 47 çынна пухса питĕрсе лартнă. Хĕрарăмсем те, ачасем те минăсем хуни çинчен пĕлмен. 1942 çулти январĕн 26-мĕшĕнче каçхине 7 сехетре нимĕçсен патрулĕ умĕнчех икĕ çурчĕ те сывлăша сирпĕннĕ, пўртри çынсем 47 çынĕ те вилсе пĕтнĕ.

Мускав облаçĕнчи Алферьево тата Тимково ялĕсенче пурăнакан халăхсем 1942 çулти январĕн 14-мĕшĕнче çырнă актран çакă курăнать: оккупантсем çав ялсенче пурăнакан халăхсене йăлтах çаратса, çуртйĕрĕсене пĕтĕмпех çунтарса янă хыççăн, ялти мĕнпур пек çынна, пĕчĕк ачасене те, стариксемпе хĕрарăмсене те—100 çынна яхăн уя хăваласа тухнă, вара пулеметран пеме тытăннă. Çапла майпа вĕсем 42 çынна вĕлернĕ, 20 çынна амантнă. Вилнисен шутĕнче кăкăр ĕмĕртекен хĕрарăмсем те, тĕрлĕ çула çитнĕ ачасем те пулнă. Фашистсем аманнă çынсене медицина пулăшăвĕ партарман, уйран илсе кўрттермен, çапла вара, аманнисем уйрах шăнса вилнĕ. Ытти çынсене, çав шутрах ачасене те, нимĕçсем хăйсемпе пĕрле хăваласа кайнă, наступлени туса пыракан Хĕрлĕ Çар ан петĕр тесе, хăйсем çав çынсен хўттипе пырса каялла чакнă. Çул çинче вĕсене, асаплантарассипе тата персе вĕлерессипе хăратса, юр тасаттарнă, виле шăтăкĕсем чавтарнă тата ытти йывăр ĕçсем те тутарнă. Хăваласа кайнă çынсенне ăшă тумтирĕсене хыва-хыва илнĕ, вĕсене хăйсене сивĕ çĕрте тытнă, апат-çимĕç паман, йывăр ĕçе тўсейменнисене прикладпа хĕненĕ, халтан кайнисене пере-пере вĕлернĕ.

Смоленск облаçĕнчи Речица ялĕнче пурăнакан хĕрарăмсемпе ачасен ушкăнĕ геройсен вилĕмĕпе вилнĕ. Çав ушкăна нимĕçсем 1942 çулти февралĕн 1-мĕшĕнче ялтан илсе тухнă. Нимĕçсем Будские Выселки ятлă ял çине контратака тунă, вĕсем çав хĕрарăмсемпе ачасене хăйсен малти подразделенийĕсен умĕнче илсе пынă. Хĕрарăмсемпе ачасем совет позицийĕсем патне çывхарсан, красноармеецсене хăюллăн çапла кăшкăрнă: „Перĕр! Пирĕн хыçра нимĕçсем!"—тенĕ. Гитлеровецсем çакна асăрханă та паттăр патриотсем çине автоматсенчен пеме тытăннă, тăватă пĕчĕк ачана, виçĕ старике вĕлернĕ. Вилнисен шутĕнче — Е. И. Шишкина тата унăн 8 уйăхри ывăлĕ Юрий, С. М. Жуковская тата унăн ывăлĕсем—15 çулти Геннадипе 13 çулти Валентин, 14 çулти Анна Юркова.

Германи оккупанчĕсем Совет Союзĕ çине вăрă-хурахла тапăнса кĕрсе малтанхи эрнесенче тунă ирсĕр ĕçсене, уйрăмăнах вĕсем Белоруссире, Украинăра тата Балтика таврашĕнчи Совет республикисенче пурăнакан халăхсене тискеррĕн хĕн-хур кăтартса вĕлернисене, хăшне-пĕрне халĕ кăна палăртса документсемпе çирĕплетсе параççĕ. Сăмахран, 1942 çулти январь уйăхĕнче, Хĕрлĕ Çар чаçĕсем Торопцы хула таврашĕнчи районра нимĕçсен кавалерин „СС" бригадине аркатса тăкнă чухне, ытти документсемпе пĕрле, çав асăннă бригадăри 1-мĕш полкăн отчетне тытса илнĕ. Вăл отчетра çак асăннă полк Белоруссире Старобинск районне мĕнле „пăхăнтарни" çинчен çырнă. Полк командирĕ çапла çырса пĕлтерет: тыткăна илнĕ 239 çынна персе пăрахнисĕр пуçне, унăн полкĕнчи отряд мирлĕ халăхсене 6.504 çынна персе вĕлернĕ. Отчетра çакна та палăртнă: çав отряд

1941 çулти июлĕн 27-мĕшĕнче 42-мĕш номерпе полка панă приказа пăхăнса ĕçленĕ. Çав бригадăри 2-мĕш полкăн командирĕ фон Магилл хăйĕн пĕлтерĕвĕнче 1941 çулти июлĕн 27-мĕшĕнчен пуçласа августăн 11-мĕшччен Припять операцине мĕнлеירт-терни çинчен çырать: „Эпир хĕрарăмсемпе пĕчĕк ачасене шурлăха хăваласа кӳртрĕмĕр, анчах та ку пире пысăк усă параймарĕ, мĕншĕн тесен шурлăх тарăн мар иккен, унта çынсем путса вилмерĕç. Пур çĕрте те тенĕ пек пĕр метр тарăнăшĕнче хытă çĕр (тен, хăйăр) пур". Çав штабрах кавалерин „СС" бригадин командирĕ штандартенфюрер янă 37-мĕш №-лĕ телеграммăна тупнă, ăна 1941 çулти августăн 2-мĕшĕнче кавалерин 2-мĕш полкĕн утлă отрядне янă пулнă. Çав телеграммăра полицин тата „СС" имперски фюрерĕ Гиммлер мирлĕ халăхсене „çавтери сахал вĕлернĕ" тесе шутлать тенĕ, çавăнпа та „çине тăрсах" ĕçлеме кирлине, „соединени командирĕсем операци тунă чухне ытла та çемçе чĕреллĕ пулнине" асăрхаттарнă, мĕн чухлĕ çын вĕлерсе пынине кулленех пĕлтерсе пыма приказ панă.

Керчь хулине Хĕрлĕ Çар ирĕке кăларни оккупантсен çакнашкал тискер ĕçне, ытти юнлă та тискер ĕçсенчен уйрăмăнах палăрса тăракан ĕçе тăрă шыв çине кăларма пулăшрĕ. Германин вырăнти комендатури ашшĕ-амăшсене хăйсен ачисене шкула яма приказ панă. Шкул ачисем, 245 ача, çав приказа итлесе, шкула кашни хăйĕн класне кайнă. Вĕсем хăйсемпе пĕрле учебниксем те, тетрадьсем те илсе пынă. Ачасем шкула пынă та каялла вĕсенчен пĕри те таврăнайман. Хулана ирĕке кăларнă хыççăн, хуларан 8 километрта, тарăн канавра çав 245 ачан виллисене тупнă. Вĕсене нимĕç оккупанчĕсем персе пăрахнă. Çав калама çук тискер ĕç çинчен калакан документсем тата фотографисем Совет Правительстви аллинче упранаççĕ.

Гитлеровецсем хăйсем тытса илнĕ Совет хулисемпе ялĕсенчи больницăсенче выртакан çынсене организованно тата массăлăн вĕлерес йăла тытнине цивилизациллĕ тĕнче пĕлме тивĕç. Çакăн евĕрлĕ питех те нумай ирсĕр ĕçсенчен пĕрне кăна асăнăпăр. Ун çинчен ятарласа тунă авторитетлă комисси çырнă актра тĕплĕн кăтартнă; çав комиссире доктор Иолович, врач Кащенко, доктор Тверитин, доктор Обновленский, профессор Вершинский, профессор Брадис, доктор Абрамов тата доктор Федосеев пулнă. Калинин облаçĕнчи Бурашево ялĕнче нимĕç офицерĕсемпе салтакĕсем доктор Литвинов ячĕпе тăракан больницăри пациентсене 530 çынна вĕлернĕ; гитлеровецсем 1941 çулти ноябрĕн 15-мĕшĕнче больницăна йышăннă та, малтан больницăран продовольстви йăлтах çаратса тухнă, çапла вара чирлĕ çынсене выçă тăратса хăварнă; кайран больницăн темиçе корпусне „тасатма" приказ панă, корпуссене кĕрсе чирлĕ выртакан çынсене, хăйсем тĕллĕн утма пултарайманнисене, койкăсем çинчен сĕтĕре-сĕтĕре антарнă; чирлисене нумайăшне палатăсенчех штыкпа чике-чике пăрахнă, пере-пере вĕлернĕ. 80 çынна, Бретнево ялне илсе кайма ĕлкĕрнĕскерсене, тепĕр кунне персе вĕлернĕ; ыттисене вара фашистсем темиçе кун хушшинче тĕрлĕ эмелсем, вĕлерекен им-çамсем (морфий, скополамин, веронал, амитал-натрий) парса вĕлернĕ. Çакăн хыççăн фашистсем больницăн çурчĕсенчен лаша

витисем туса хунӑ. Каялла чакнӑ чухне фашистсем больницӑн 6 лечебнӑй корпусне, ачасен яслине тата пурӑнакан 5 çурта вут тивертсе çунтарса янӑ.

Çак фактсем пурте ӗнтӗ вӑрӑ-хурахла ушкӑн, гитлерла Германин правительстви тенӗскер, пирӗн халӑха пӗтӗмпех пӗтерсе тӑкма шухӑшлани çинчен, гитлеровецсем этеме курайман хӑйсен фашистла планне пурнӑçлас тесе темӗнле тискер ӗçсем те тума хатӗр тӑни çинчен, темӗнле преступленисем тума та, массӑллӑн вӗлерме те хатӗр тӑни çинчен уççӑн кӑтартса параççӗ.

## VI.

## ТЫТКӐНА ЛЕКНӖ ÇАР ÇЫННИСЕНЕ ВӖЛЕРСЕ ПӖТЕРНИ.

Гитлерла правительство çын вӗлеренсен банди пулса тӑни, вӑл хӑйӗн умне пирӗн гражданcене вӗлерсе пӗтерес тӗллев лартни—çакӑ вӑл Совет çарӗн тыткӑна лекнӗ çыннисем тӗлӗшпе гитлеровецсем тунӑ хӑрушла преступленисенчен те курӑнать. Совет Правительстви аллинче халӗ Совет çарӗн тыткӑна лекнӗ çыннисем тӗлӗшпе преступленисем тунӑ юнлӑ преступленисене çирӗплетсе кӑтартакан нумай çӗршер çӗнӗ документсем пур, вӑл преступленисем çинчен СССР Правительстви 1941 çулти ноябрӗн 25-мӗшӗнче панӑ нотӑра каланӑччӗ. Çакна уççӑнах палӑртнӑ: Германи çарӗн командованийӗ, хӑйӗн çарӗ юлашки уйӑхсенче тӳснӗ пораженисемшӗн тавӑрас тесе, Совет çарӗн тыткӑна лекнӗ çыннисене вӗлерсе пӗтерес йӗркене пур çӗрте те практикӑна кӗртнӗ.

Фронт тӑршшӗпех, Арктикӑран пуçласа Хура тинӗс таранах, Совет çарӗн тыткӑна лекнӗ çыннисен асаплантарса вӗлернӗ ӳчӗсене тупнӑ. Çак вилесем çинче яланхи пекех вӗлерес умӗн тискеррӗн асаплантарнин паллисем пур. Хӗрлӗ Çарӑн чаçӗсем нимӗçсенчен тытса илнӗ блиндажсенче, йывӑçпа çӗртен тунӑ вырӑнсенче, çавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан пунктсенче те Совет çарӗн тыткӑна лекнӗ çыннисен тискер кайӑкла асаплантарса вӗлернӗ ӳчӗсене тупаççӗ. Курнӑ çынсем алпусса çырнӑ актсенче час-часах çакӑн йышши фактсем тӗл пулаççӗ: 1942 çулти мартӑн 2-мӗшӗпе 6-мӗшӗнче Крым фронтӗнче 66,3 çӳллӗшӗн тата Джонтор ялӗн районӗнче тыткӑна лекнӗ красноармеецсен 9 виллине тупнӑ, вӗсене фашистсем çавтери тискеррӗн çуркаласа пӗтернӗ пирки икӗ виллине çеç палласа илме май килнӗ. Асаплантарса вӗлернӗ тыткӑнри çар çыннисен пӳрнисем çинчи чӗрнисене тӑпӑлтарса кӑларнӑ, куçӗсене чиксе шӑтарнӑ, пӗринне кӑкӑрӗн пӗтӗм сылтӑм пайне касса илнӗ, ыттисене вуткӑварпа асаплантарнӑ, çӗçӗпе нумай çӗртен чиксе суранлатнӑ, янаххисене ватса пӗтернӗ. Феодоси хулинче красноармеец-азербайджанецсен асаплантарса вӗлернӗ вуншар виллисене тупнӑ. Вӗсен хушшинче: Джафаров Исмани-Заде, гитлеровецсем унӑн куçне чавса кӑларнӑ, хӑлхисене касса илнӗ; Алибеков Кули-Заде, гитлеровецсем унӑн аллине пӑрса янӑ, кайран штыкпа чиксе вӗлернӗ; ефрейтор Ислам-Мамед Али оглы, гитлеровецсем унӑн хырӑмне касса çурнӑ; Аскеров Мустафа оглы, ӑна юпа çумне пралукпа çыхса лартнӑ пулнӑ, вӑл вара сурансене

пула ҫавӑнтах вилнӗ. Ҫакӑн пек тискер ӗҫсене Германи фашисчӗсене пулӑшакан финсем те Инҫетри ҫурҫӗрте туса пыраҫҫӗ. Карели фронтӗнче Хӗрлӗ Ҫар чаҫӗсем тапӑнса пынӑ чухне Финлянди фашисчӗсем асаплантарса пӗтернӗ красноармеецсен вуншар виллисене тупнӑ. Сӑмахран, Сатаев красноармеецӑнне финсем тутине касса илнӗ, куҫне чиксе шӑтарнӑ, чӗлхине касса илнӗ. Гребенников красноармеецӑнне вӗсем хӑлхине касса илнӗ, куҫне чиксе шӑтарнӑ, пушӑ гильзӑсем кӗртсе лартнӑ. Лазаренко красноармееца финсем нумайччен асаплантарнӑ хыҫҫӑн пуҫне ҫапса ҫурнӑ та сухарисем тултарнӑ, сӑмса шӑтӑкӗсене патронсем чиксе лартнӑ, кӑкӑрӗ ҫинче хӗртнӗ тимӗрпе ҫунтарса пилӗк кӗтеслӗ ҫӑлтӑр тунӑ.

Совет ҫарӗн тыткӑна лекнӗ ҫыннисене массӑллӑн вӗлернин хурлӑхлӑ та пысӑк списокӗнчи ак хӑшпӗр фактсем.

Смоленск облаҫӗнчи Красноперово ялӗнче Хӗрлӗ Ҫарӑн наступлени туса пыракан чаҫӗсем тыткӑна лекнӗ 29 красноармеецпа командирӑн ҫарамаслантарса пӑрахса хӑварнӑ виллисене тупнӑ. Вӗсене пӑшалтан персе амантнӑ йӗр ниҫта та пулман. Вӗсене пурне те ҫӗҫӗпе чиксе вӗлернӗ пулнӑ. Ҫав районрах, Бабаево ялӗнче, гитлеровецсем тыткӑна лекнӗ 58 красноармеецпа икӗ санитаркӑна улӑм купи ҫумне тӑратса улӑмне тивертсе янӑ. Ҫунса кайма тытӑннӑ ҫынсем тарма хӑтлансан, гитлеровецсем вӗсене пере-пере пӑрахнӑ. Кулешовка ялӗнче нимӗҫсем йывӑр аманнӑ 16 красноармеецпа командира ҫавӑрса илнӗ, тыткӑна лекнисене хывӑнтарнӑ, вӗсен суранӗсем ҫинчи повязкисене сӗвсе илнӗ, вӗсене выҫӑ усранӑ, штыксемпе чикнӗ, аллисене хуҫнӑ, суранӗсене чакаланӑ тата ытти майпа та асаплантарнӑ, ҫакӑн хыҫҫӑн чӗрӗ юлнисене пӳрте хупнӑ та ҫунтарса янӑ.

Калинин облаҫӗнчи Суренево ялӗнче нимӗҫсем аманнӑ тыткӑнри 50 красноармееца шкул ҫуртне хупнӑ та вӗсене ҫунтарса янӑ. Волоколамск хулинче, Пролетарски урамра, 3/6-мӗш номерлӗ ҫуртӑн 5-мӗш хутне хупса лартнӑ красноармеецсене, унта пушар тухсан та, ҫуртран тухма чарнӑ. Тухма е чӳречисенчен сиксе хӑтӑлакансене пере-пере вӗлернӗ. Ҫулӑмра ҫуннипе тата персе пӑрахнипе тыткӑнри 60 ҫын пӗтнӗ. Тула облаҫӗнчи Поповка ялӗнче тыткӑна лекнӗ 140 красноармееца сарайне хӑваласа кӗртнӗ те сарайне вут тивертсе янӑ. Ҫулӑмра 95 ҫын пӗтнӗ. Ленинград облаҫӗнчи Погостье станцинчен 6 километрта Хӗрлӗ Ҫар чаҫӗсем хӗснипе чакакан нимӗҫсем, Совет ҫарӗн тыткӑна лекнӗ 150 ҫыннине тискеррӗн хӗнесе асаплантарнӑ хыҫҫӑн, ҫурӑлса каякан пульӑсемпе пере-пере вӗлернӗ. Чылай вилесенне хӑлхисене касса илнӗ, куҫӗсене чавса кӑларнӑ, пӳрнисене касса татнӑ, хӑшпӗрисенне пӗр аллине е икӗ аллине те касса илнӗ, чӗлхисене тӑпӑлтарса кӑларнӑ. Виҫӗ красноармеецӑн ҫурӑмӗсем ҫинче ҫӑлтӑрсем касса кӑларнӑ. Смоленск облаҫӗнчи Кондрово ялне Хӗрлӗ Ҫар чаҫӗсем 1941 ҫулта декабрьте ирӗке кӑлариччен кӑшт маларах нимӗҫсем хула тулашӗнче тыткӑнри 200 красноармееца персе вӗлернӗ. Вӗсене нимӗҫсем хула тӑрӑх ҫарамаслантарса тата ҫарауран илсе пынӑ; вӑйсӑрланса ҫитнӗ, малалла утма пултарайман красноармеецсене тата утнӑ вӑхӑтрах вӗсене ҫӑкӑр

чĕллисем илсе тухса паракан вырăнти çынсене те çавăнтах пере-пере вĕлернĕ.

Юлашки вăхăтра Германи командованийĕ Совет çарĕн тыткăна лекнĕ çыннисемпе мина хирĕсене тасатас ĕçре тата пурнăçшăн хăрушă ытти ĕçсенче çĕнĕрен усă курнине палăртнă. Сăмахран, Пысăк тата Пĕчĕк Влоя ялĕсен районĕнче, пĕтĕçтерсе тăратнă тыткăнри вуншар çынсене гитеровецсем минăланă уй тăрăх тăватă талăк хушши хăваласа çӳренĕ. Минăсем çинче кунсерен темиçе çын сирпĕне-сирпĕне кайнă. Тыткăна лекнĕ çынсене çапла майпа вĕлерессине Германи командованийĕн приказĕсенче ятарласах палăртса хунă. 203-мĕш пехотнăй полка панă 109-мĕш номерлĕ приказра çапла каланă: „Армийĕн главнокомандующийĕ генерал-фельдмаршал Рундштедт çапла тума хушрĕ: Германи юнне сыхлас тесе, çапăçу тӳлашĕнче минăсем шырас тата мина уйĕсене тасатас ĕçе тыткăна лекнĕ вырăссемпе туса иртермелле. Ку вăл Германи минисем тĕлĕшпе те çаплах пулмалла“.

Тыткăна лекнĕ çынсене тăхăнмаллисĕр, уйрăмах ăшă тумтирсемсĕр хăварни Германи командованийĕ пĕрмаях пулăшнипе пулакан мародерство пулса тăрать. Хĕллехи условисенче тыткăна лекнĕ çынсемшĕн çакă вăл шăнса вилнипе пĕрех пулнă. Çаксем пурте Германи командованийĕн приказĕсем тăрăх пулса пыраççĕ. Нимĕççен 34-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 88-мĕш полк штабĕн „Тумтирсем пирки ĕç мĕнле тăни“ ятлă приказĕнче „Тыткăна лекнĕ вырăссен уринчен тăхăнмаллисене ним шухăшласа тăмасăр хывса илмелле“ тесе хушнă. Çак приказ ăнсăртран пулман. СССР çине ултавлăн тапăначченех Германи командованийĕ хăйсен чаçĕсене çапла майпа тумлантарассине пăхса хунă. 56-мĕш дивизири 231-мĕш полкăн ĕç хучĕсем хушшинче „Хĕвелтухăçĕнчи снабженин принципĕсем çинчен“ 1941 çулти июнĕн 6-мĕшĕнче кăларнă 121/4-мĕш номерлĕ циркуляра тупнă, унăн 8-мĕш страницинче çапла каланă: „Тумтир парса тăрасси çинчен шутламалли çук. Çавăнпа та тыткăна лекнĕ çынсем çинчен урана тăхăнмаллисене хывса илни тата юрăхлă тумтирсемпе, кĕпейĕмĕсемпе, носкисемпе т. ыт. пуринпе те çийĕнчех усă курни питĕ кирлĕ“, тенĕ.

Совет çарĕн тыткăна лекнĕ çыннисене масси-массипе вĕлерсе пĕтерес тесе, вĕсене фашистсем апат-çимĕççĕр хăвараççĕ, вăраххăн выçса вĕлермелле тăваççĕ, хăшпĕр чухне тата пĕлсе тăрсах юрăхсăр апат-çимĕç парса вĕлереççĕ. Совет органĕсен аллинче çӳлте асăннă 88-мĕш полк штабĕн 202-мĕш номерлĕ приказĕ пур, унта çапла каланă: „Лаша виллисем тыткăна лекнĕ вырăссен апачĕ пулса тăраççĕ. Çавăн пек пунктсем (лаша виллисен куписем) ăçтине кăтартса паллă тунă. Вĕсем Мало-Ярославец патĕнчи шоссе çинче тата Романовăпа Белоусово ялĕсенче пур“.

Мотопехотăн 60-мĕш дивизине 166/41-мĕш номерпе панă приказ тыткăнри çар çыннисене массăллăн вĕлерсе пыма тӳрремĕнех хушать. Приказра çапла каланă: „Вырăс салтакĕсемпе кĕçĕн командирĕсем çапăçура питĕ хăюллă. Уйрăм пĕчĕк часть та пулин яланах атакăна кĕрет. Çавăнпа та тыткăна лекнĕ çар çыннисем çине этемле пăхни пулмалла мар. Противника пăшал-

ран персе е чиксе пĕтерсе тăкасси противника пĕтĕмĕшпех сиенсĕрлетичченех пулса пымалла...“

Совет ҫарĕн тыткăна лекнĕ ҫыннисене мĕнле тыткаламалли ҫинчен калакан Германи командованийĕн 1/3058-мĕш номерлĕ инструкцийĕнче ҫакăн пек кăтартса панă: „Кăшт та пулин итлеменни палăрсанах, вăйлăн та ҫирĕппĕн кĕрешес пулать, хĕҫпăшалпа пĕр шеллемесĕр усă курас пулать. Патакпа, хулăпа, ҫапăпа усă курни пулмалла мар. Итлекен тата ĕҫлеме юратакан тыткăнри ҫар ҫыннине ҫăмăллăн тыткалани хамăр вăйсăррине кăна кăтартса парать тата ун пекки пулмалла та мар“. (II-мĕш пунктран). „Тыткăна лекнĕ ҫар ҫыннисем ĕҫре чухне вĕсем хушшинче яланах хĕҫпăшалпа усă курма май паракан хушă пулмалла“. (III-мĕш пунктран).

Ҫаксем пурте ҫителĕксĕр пулнă иккен. Гитлер ячĕпе, главнокомандующи текенскерĕн ячĕпе, Германи ҫарĕн верховнăй командованийĕ 1942 ҫулти январĕн 14-мĕшĕнче кăларнă приказра ҫапла каланă (II-мĕш пункт): „Тыткăна лекнĕ ҫар ҫыннин ӳкĕтне кĕни, ăна этем пек тытса усрани пачах та пулмалла мар.

Германи салтакĕ хăй тыткăнри ҫынран ҫӳлте тăнине яланах туйтарса тăма тивĕҫлĕ... Тыткăнри ҫын тĕлĕшпе хĕҫпăшалпа мĕнле те пулин кая юлса усă курни хăрушлăх пулҫа тăрать. Ҫак приказ пĕтĕмĕшпех пурнăҫа кĕрĕ тесе главнокомандующи шанса тăрать“.

Нимĕҫсем оккупациленĕ ССР Союзĕн территорийĕнче, ҫавăн пекех тата Германин инҫетри тылĕпе Европăри вăл оккупациленĕ ҫĕршывсенче тыткăнри красноармеецсем мĕнле пурăнни ҫинчен Совет Правительстви халĕ те шанчăклă информаци илсе тăрать. Ҫав информаци тыткăнри красноармеецсен, ытти ҫĕршывсен тыткăнри ҫынсемпе танлаштарсан, уйрăмăнах начар условисенче пурăнни ҫинчен, пурнăҫ режимĕ малалла та начарланса пыни ҫинчен, Советăн тыткăна лекнĕ ҫыннисем выҫлăха тата чирсене пула вилсе пĕтни ҫинчен, гитлерла влаҫсем красноармеецсене ирсĕррĕн тата тискеррĕн мăшкăласа усрани ҫинчен каласа парать. Ҫав гитлерла влаҫсем пĕтĕм тĕнчери правăн тата этемлĕх моралĕн чи элементарнăй требованийĕсене тахҫанах пăснă ĕнтĕ.

Кăҫалхи февралĕн 12-мĕшĕнче Лондонра Совет Посолне Польша Республикин Правительстви Польша территоринче тата нимĕҫсем оккупациленĕ Совет облаҫĕсенче Советăн тыткăнри ҫыннисем мĕнле пурăнни ҫинчен ҫырса меморандум панă, унта Германи влаҫĕсем Советăн тыткăнри ҫыннисене этемле мар тыткаланин нумай йышлă факчĕсене кăтартса панă. Польша Правительствин меморандумĕнче: „Советăн тыткăна лекнĕ ҫыннисене тыткалани нимĕҫ варварствин чи ирсĕр страници пулса тăрать пулмалла“, тесе питех те тĕрĕс каланă.

Ҫапла пулин те, Совет Правительстви, гуманноҫăн тата пĕтĕм тĕнчери йĕрке тăрăх хăй ҫине илнĕ обязательствăсен принципĕсене тĕрĕс тытса пырса, хальхи обстоятельствăсенче те Германин тыткăна лекнĕ ҫар ҫыннисем тĕлĕшпе ответлă репрессивнăй мерăсем йышăнма шутламасть, тыткăна лекнĕ ҫар ҫыннисен режимĕ тĕлĕшпе 1907 ҫулта Гаагăри Конвенцире Совет Союзĕ хăй ҫине илнĕ обязательствăсене халиччен пекех пăхăнса

пырать. Çав конвенци çине Германи те алă пуснă, анчах вăл унăн пур пункчĕсене те ултавлăн пăсрĕ.

Çавăнпа пĕрлех Совет Правительстви çапла пĕлтерет: Советăн тыткăна лекнĕ çар çыннисене вĕлерсе айăпа кĕнĕ гитлерла ирсĕр правительсемпе вĕсен тарçисем çак питех те тискер ĕçсемшĕн пĕтĕмĕшпех ответ тытмалла.

Ирĕклĕхе юратакан мĕнпур халăхсен интересĕсем, пĕтĕм этемлĕхĕн интересĕсем çапла тума хушаççĕ: урса кайнă çынçиенсен шайкине, гитлерла Германин правительстви текенскерне мĕн май пур таран хăвăрт тата яланлăхах пĕтерсе тăкмалла.

* * *

Нимĕçсен фашистла вăрă-хурахĕсем мирлĕ Совет халăхĕсем тĕлĕшпе тата Советăн тыткăна лекнĕ çыннисем тĕлĕшпе тăвакан тискер те хăрушă ĕçсем çавăн пек ĕнтĕ. Çав тискер ĕçсем умĕнче Чингис-ханăн, Батыйăн, Мамайăн тискер ĕçĕсемпе хаярлăхĕсем те тĕксĕмленсе юлаççĕ.

Совет Союзĕнчи халăхсем валли юнлă Гитлер хатĕрленĕ нимĕçле-фашистла пусмăр çавăн пек ĕнтĕ. Çав пусмăр хăйĕн ирсĕрлĕхĕпе тата хаярлăхĕпе тутарсемпе монголсен историре пурне те паллă пулса тăракан пусмăрăн мĕнпур тискерлĕхĕсемпе хаярлăхĕсенчен пуринчен те иртсе каяççĕ.

Оборона Халăх Комиссарĕ Сталин юлташ 1942 çулти февралĕн 23-мĕшĕнче каларнă пуриншĕн те паллă Приказра Совет Правительстви çапла каларĕ: Совет Союзĕнчи халăхсемпе Хĕрлĕ Çарăн „ытти халăхсене, çав шутрах нимĕç халăхне те, раса тĕлĕшпе курайманни пулман тата пулма та пултараймасть,“ пирĕн Хĕрлĕ Çар „мĕнпур халăхсемпе расăсем çине пĕртан пăхма, ытти халăхсен прависене хисеплеме“ вĕренсе воспитани илнĕ; пирĕн Хĕрлĕ Çарăн „нимĕç халăхне вĕлерсе пĕтерес тата Германи государствине пĕтерсе тăкас“ тĕлллев пек „идиотла тĕллевсем çук, пулма та пултараймаççĕ“.

Çавăнпа та ĕнтĕ Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕн, хамăрăн тăван çĕршывăн ирĕклĕхне, чыслăхне тата никама пăхăнманлăхне, пирĕн çĕршыври халăхсен ирĕклĕхĕпе телейне Германи империалисчĕсенчен хӳтĕлесе, нимĕçсен фашистла захватчикĕсене пушшех те вăйлăн çĕмĕрсе тата пĕтерсе пыма сăлтав та правăсем те пур.

Антив, Гитлерпа гитлерла вăрă-хурахсем Совет Союзĕнчи халăхсене чуралантарас тата Совет государствине пĕтерсе тăкас тесе кулăшла тĕллевсем лартчăр. Пурне те тума пултаракан улăпсем пек курăнма тăрăшакан Берлинри карликсен çак камитла хăтланăвĕсем култарнисĕр пуçне урăх нимĕн те пама пултараймаççĕ. Дон-Кихот та пĕррехинче пĕтĕм тĕнчене тепĕр майлă çавăрса хума тĕллев лартнă, анчах вăл çынсемшĕн кулăш япали пулса тăнă. Власть патне ăнсăртран пынă фантазерсемпе авантюристсем кăна çавăн пек идиотла тĕллевсем лартма пултарнине, вĕсем пурпĕрех тĕп пулассине чи çывăх вăхăтрах пулас фактсем кăтартса парĕç.

Оккупациленĕ Совет районĕсенче вĕçĕ-хĕррисĕр преступле-

нисем туса, çаратса, çĕмĕрсе, юхăнтарса, тискеррĕн асаплантарса, мăшкăлласа, пусмăрласа тата массăллăн вĕлерсе гитлеровецсем тăвакан ирсĕр ĕçсене пĕтĕм тĕнче умĕнче тăрă шыв çине кăларса, ун çинчен ССР Союзĕ дипломатиллĕ çыхăну тытакан Правительствăсене пурне те пĕлтерсе,—Совет Союзĕн Правительстви, Совет Союзĕнчи халăхсен ячĕпе çапла калать: СССР халăхне хирĕç тата ирĕклĕхе юратакан пĕтĕм халăхсене хирĕç нихăçан этем илтсе-курман мĕнпур тискер ĕçсем хăйсем тунишĕн çирĕп ответ тытассинчен тата тивĕçлĕ наказани илессинчен гитлерла правительствăпа унăн тарçисем хăтăлаймĕç.

Йышăнăр т. ыт. те.

**В. МОЛОТОВ**".

Мускав, 1942 çулти апрелĕн 27-мĕш.


В. М. МОЛОТОВ

О ЧУДОВИЩНЫХ ЗЛОДЕЯНИЯХ, ЗВЕРСТВАХ И НАСИЛИЯХ НЕМЕЦКО-ФАШИСТСКИХ ЗАХВАТЧИКОВ В ОККУПИРОВАННЫХ СОВЕТСКИХ РАЙОНАХ И ОБ ОТВЕТСТВЕННОСТИ ГЕРМАНСКОГО ПРАВИТЕЛЬСТВА И КОМАНДОВАНИЯ ЗА ЭТИ ПРЕСТУПЛЕНИЯ

НОТА НАРОДНОГО КОМИССАРА ИНОСТРАННЫХ ДЕЛ ТОВ. В. М. МОЛОТОВА

на чувашском языке

ГОСИЗДАТ ЧУВАШ. АССР
Чебоксары — 1942

Редактор перевода *П. Т. Золотов* Тех. ред. *А. Т. Быков*

Подп. к печати 13 мая -42 г. НТ 781 Объем 2 п. л. Тираж 20.000 экз. Зак. № 255.

Отпечатано в типографии № 1 Управления полигр. промышлен. при СНК ЧАССР г. Чебоксары, Володарского, 5.